1938 АПРЕЛ 14 КĔÇНЕРНИКУН
85 (4898)-мĕш №

Ц. Б. им. Горького 0

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

ИНФОРМАЦИЛĔ ПĔЛТЕРŸ

1938 çулти апрел уйăхĕн пуçламĕшĕнче ПСК(б)П Чăваш Облăç Комитечĕн черетлĕ VI-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум çак ыйтусене сÿтсе-йаврĕ:

1. Чăваш АССР халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планĕ çинчен.
2. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене хатĕрленесси çинчен.
3. Йертсе пыракан парторгăнсен суйлавĕсене иртересси çинчен.

ПСК(б)П Обкомĕ.

Обком пленумĕн решенийĕсене большевикла пурнăçа кĕртер

Парти Обкомĕн черетлĕ VI-мĕш пленумĕ политикăла пысăк ыйтусене: халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планĕ çинчен, РСФСР Верховнăй Советне тата Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлама хатĕрленесси çинчен, йертсе пыракан парторгăнсен суйлавĕсем çинчен сÿтсе-йаврĕ.

Пленум çак ыйтусем тăрăх йышăннă решенисем партин кашни организацийĕшĕн, кашни руководителĕшĕн тата кашни коммунисăн ĕç программи пулса тăраççĕ. Парти райкомĕсен тата Шупашкар хула комитечĕн çав решенисене пур коммуниссене те ăнлантарса парас ĕçе халех организацилемеле. Кашни коммунис çав решенисене тĕплĕн ăнланса илтĕр.

Хамăрăн аслă пĕтĕм Совет çĕршывĕ пекех пирĕн Чăваш республикĕ те иккĕмĕш пилĕкçулăхри хуçалăхлă тата политикăлă задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕ. Социалисăм çĕнтерчĕ, социалисăм совет халăх пурнăçĕн йăлине кĕчĕ. Халăх тăшманĕсене — фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă националисла агĕнчĕсене тăрă шыв çине кăларса çапса аркатнă. Çаксем Чăваш республикине хуçалăхпа культура тĕлĕшĕнчен тата хăвăрт ÿссе пыма çĕнĕ майсем туса пачĕç. Халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планĕ тăрăх промышлĕннăç, йалхуçалăх, культура халиччен курман хăвăртлăхпа ÿсеççĕ, Чăваш республикĕнчи ĕççыннисен пуйан та культурăлă пурнăçĕ хăвăрттăн малала кайать.

Парти организацисен задачи çак плана кашни ĕççынни патнĕ çитересси, плана пурнăçа кĕртме мобилизацилесси пулать. Социалисăмла ăмăртупа стахановла йухама массăлăн сарса, сăтăрçăсем социалисăм строительствин пур участкисенче те туса хăварнă сăтăрла ĕçĕн йулашкийĕсене пĕтерме, халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планне пур кăтартусем тăрăх та ирттерсе тултарассишĕн кĕрешме рабочисене, колхозниксене, интеллигенцине çĕклемеле.

Обком пленумĕ РСФСР Верховнăй Советне тата ЧАССР Верховнăй Советне суйлама хатĕрленес тĕлĕшпе конкретлă решени йышăнчĕ. ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн суйлавне Чăваш республикĕнчи ĕççыннисем, пĕтĕм Совет халăхĕпе пĕрле, активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăласа, совет халăхĕн мораллĕ-политикăлă пĕрлĕхне, Ленин—Сталин партийĕпе таччăн çыхăнса тăнине кăтартрĕç. Хамăр çĕршывра социалисăм çĕнтерни, ĕççыннисем совет влаçĕ тавра тачă пĕрлешсе тăни, Ленин—Сталин партине шанса тăни, коммуниссемпе партире тăманнисен блок политики, халăх тăшманĕсене—троцкиссене, бухаринĕçсене, буржуала националиссене çĕмĕрсе тăкни ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавне ăнăçлăн ирттерме май пачĕ.

Парти организацийĕсем çак демократилĕ суйлава çирĕп йертсе пычĕç. Вĕсем Сталин йулташ „ĕçлемеле, найкăшмала мар", тесе кăтартса пани тăрăх ĕçлесе пычĕç. Партири тата партире тăман большевиксем пиншер çын коммуниссемпе партире тăманнисен блок ĕçĕшĕн, Ленин—Сталин партин ĕçĕшĕн тăрăшса массăлă, агитацилĕ тата пропагандăлă ĕçе активлăн хутшăнчĕç.

Парти организацийĕсен агитацийĕ, пропагандăла тата организацилĕ техникăла ĕçĕн опычĕсем пысăк. Вĕсем çак опыта иртнĕ суйлав вăхăтĕнче туйанчĕç. Çак опыт ĕнтĕ пире — тата тимлĕрех пулмала, мăн-кăмăлланса мухтанмала мар, çитес суйлав хăй тĕллĕнех иртессе шанса лармала мар, тесе хушать. Парти организацисен сыхă пулмала, суйлав кĕрешĕвне тăшмансен агитацине хирĕç, тăшманла кандидатурăсене хирĕç кĕрешме хатĕр пулмала.

Парти организацисен РСФСР Верховнăй Совечĕн тата ЧАССР Верховнăй Совечĕн суйлавне хатĕрленме халех хастарлăн тытăнмала. Иртнĕ суйлаври политикăла пуйан опытпа йăлтах усă курмала, агитатăрсемпе пропагандиссен нумай пинлĕ çарне çĕнĕрен ĕçе хутшăнтармала. Организацилĕ ĕçсене çĕнĕрен çĕклесе йамала. Организацилĕ тата политикăла ĕç кăна суйлава ăнăçлăн ирттерме май парать.

Обком пленумĕн решенийĕ суйлава хатĕрленсе ирттерме конкретлă тата тĕплĕ программă парать. Ăна пурнăçа кĕртни пулас суйлавсене ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн суйлавĕсенчен те тата лайăхрах, тата йĕркелĕрех ирттерме, социалисăм строительствинче çĕнĕ çĕнтерÿсем тума май парать.

Партин Чăваш организацийĕ ПСК(б)П Тĕпкомĕн февраль-мартри пленумĕн решенийĕсемпе хĕçпăшалланса социалисăм строительствин пур участкисенче те çĕнĕрен пысăк çитĕнÿсем турĕ, троцкисла-бухаринла, буржуалă националисла контрреволюцилĕ йăвасене çапса çĕмĕрес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕ, парти тата государствă аппарачĕсене ик-питле етемсенчен тата предательсенчен тасатрĕ.

Партин йертсе пыракан органĕсен 1938 çулта апрелрен пуçласа ийунĕн çуруйăхне çити тапхарта иртекен суйлавĕ пирĕн партин тата çĕршыван пурнăçĕнче пит те пысăк вырăнта тăрать. ПСК(б)П Тĕпкомĕ партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсем çинчен йышăннă постановлени çитес суйлавра парти организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсене уççăн кăтартса пана.

„Партин йертсе пыракан органĕсене суйласси партилĕ политикăлă ĕçе малашне те пур майсемпе те хăпартса пырассишĕн парторганизацисемпе массăсен çыхăнăвне çирĕплетессишĕн тата парторганизацисен умĕче тăракан политикăлă-хуçалăхла задачăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн кĕрешнипе пулса иртмеле", тенĕ Тĕпкоман çав постановленийĕнче. Парторганизацисен çитес суйлаври задачи—партин шалти демократине çирĕп тытса пыни тăрăх, тата критикăпа самокритикăна хăйулăн сарса пыни тăрăх: „Партин йертсе пыракан органĕсене çителĕклĕ тĕрĕсленнĕ, пирĕн партишĕн вĕçĕ-хĕррисĕр парăнса ĕçлекен, халăх тăшманĕсемпе кĕрешес ĕçре тĕрĕсленнĕ тата коммунисла парти ĕçне вĕçне çитиех сыхласа тăма пултаракан большевиксене суйласа хăварасси пулать" (Тепком постановленинчен).

Партин Чăваш республикĕнчи организацийĕсем умĕнче политикăлă питĕ пысăк задачăсем тăраççĕ, вĕсем: партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕ, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем, çураки, хуçалăхла-политикăла ĕçсен планĕсене (аш-какай хатĕрлесси, укçа-тенкĕ пухасси, т. ыт.) тултарас йĕнепе кайа йулнине пĕтересси, халăх хуçалăхĕн планне тултарасси, сăтăрçăсем тунă ĕçсен йулашкисене пĕтересси, троцкисла-бухаринла, буржуалла националисла бандăна вĕсен çитиччен палăртса пĕтерсе хурасси пулаççĕ. Çаксем пурте Обкомăн VI-мĕш пленумĕн решенисене большевикла пурнăçа кĕртме хушаççĕ.

ЙЕРТСЕ ПЫРАКАН ПАРТОРГĂНСЕН СУЙЛАВĔСЕНЕ ИРТЕРЕССИ ÇИНЧЕН

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн VI-мĕш пленумĕ Г. И. ИВАНОВ йулташ доклачĕ тăрăх йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Сталин йулташ ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн февраль-мартри пленумĕнче панă кăтартусем тăрăх, ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн февраль-мартри тата йанварти пленумĕсен решенийĕсем тăрăх ĕçлесе пырса, партин Чăваш организацийĕ, партин тата халăхăн тăшманĕсене тупса палăртса тата çĕмĕрсе, ĕççынни массисене коммуниссен партийĕ тавра пĕтĕçтерсе, парти органĕсен йулашки суйлавĕсем хыççăн иртнĕ вăхăтра чылай çитĕнÿсем турĕ.

Чăваш республикĕнчи ĕççыннисем, пĕтĕм Совет халăхĕпе пĕрле, ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавне активлăн хутшăнса тата пурте пĕр хавасăн коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăласа хăйсем пирĕн парти тавра тачă пĕтĕçсе тăнине кăтартрĕç, çапла вĕсем пирĕн парти вăйлине, совет халăхĕ мораль-пе политикă тĕлĕшпе пĕрлĕхлине, большевиксен партийĕ массăсемпе уйăрăлми çыхăнса тăнине кăтартса пачĕç.

Çак çулталăк хушшинче парти тавра нумай мĕлйунлă çĕнĕ актив ÿссе çитĕнчĕ. Çамрăк та талантлă çĕнĕ работниксене хăйулăн ĕçе партин пирĕн парти, совет тата хуçалăх организацийĕсене çирĕплетрĕ, массăсен пуçарулăхĕпе творчестви ÿссе пыма тата анлăрах çул уçрĕ.

Чăваш халăхĕ Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе социалисăм строительствин пур отраслисенче те çĕнĕрен пысăк çĕнтерÿсем турĕ, вăйлă тырпул туса илчĕ, колхозсене çирĕплетес тĕлĕшпе чылайах ĕçсем турĕ.

Партин Чăваш организацийĕ, пĕтĕм парти пекех, Сталин йулташăн кăтартăвĕсемпе хĕçпăшалланса, иртнĕ çулталăкра контрреволюцилĕ троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла йăвасене арката тĕлĕшпе пит пысăк ĕç турĕ, парти тата государствă аппаратне двурушниксемпе предательсенчен тасатрĕ. Парти аппаратĕнчен унта хĕсĕнсе кĕнĕ фашисла сволăчсене тимĕр шăпăрпа шăлса кăларчĕ.

Партин йертсе пыракан органĕсен пулас суйлавĕнче чи пысăк та паха задачă—„...партин йертсе пыракан органĕсене çителĕклĕ тĕрĕсленнĕ, пирĕн партишĕн вĕçĕ-хĕррисĕр парăнса ĕçлекен, халăх тăшманĕсемпе кĕрешес ĕçре тĕрĕсленнĕ тата коммунисла парти ĕçне вĕçне çитиех сыхласа тăма пултаракан большевиксене суйласа хăварасси пулать..." (ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ йышăннă постановленирен).

Партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене пур пуçламĕш тата районсенчи парторганизацисенче, облăçри парторганизацинче ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн постановленинче кăтартнă срукçенче—1938 çулти апрел уйăхĕнчен пуçласа ийунĕн пĕрремĕш çуруйăхлăхне çити тапхăрта—ирттермеле.

Парти органĕсен суйлавĕсем партин шалти пурнăçĕнчи политикăла пысăк событи пулса тăраççĕ. ПСК(б)П Облăç Комитечĕн пленумĕ партин райкомĕсене пурне те тата Шупашкар хула комитетне суйлавсене организацилĕ ирттерме хатĕрленессине халех организацилеме хушать. Уйрăм илсен, пленум халех партикомсен секретарĕсемпе парторгсен канашлăвĕсене ирттерме, пуçламĕш организацисенче пуринче те ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн постановленине тата партин йертсе пыракан органĕсене суйламали инструкцийе вĕренессине организацилеме, суйлавсене ирттермели йĕркесемпе кашни коммуниса паллаштарма, чи тивĕçлĕ, социалисăм ĕçне чи паранна работниксем суйланмала тума, массăсен политикăла активлăхĕпе революцилĕ сыхăлăхне çĕклеме хушать.

Пур хаçатсен те — республикăрисен тата районрисен — парти органĕсен суйлавĕсене ирттерме хатĕрленессипе суйлавсем мĕнле пынине тата парти пурнăçĕн ыйтăвĕсене тăтăшах çутатса пыма хушас.

Большевикла принцип — демократилĕ централисăм парти органĕсене хăйсен парторганизацийĕсем умĕнче вăхăтран вăхăта обиазательнă отчот тытма хушать. „Парти массисем хăйсен руководителĕсене активсенче, конференцисенче, сьессенче вĕсен отчочĕсене итленипе, çитменлĕхсене критикленипе, йулашкинчен, ку йе тепĕр йертсе пыракан йулташсене йертсе пыракан органсене суйланипе йе суйламаннипе тĕрĕслеççĕ". (Сталин).

Пленум пĕтĕм парторганизацийе иртнĕ çулти суйлавсене ирттернĕ чухне пулнă йăнăшсене пурне те шута илме кирлине асăрхаттарать, вăл йăнăшсем чи малтан —парти Обкомĕ тата районри комитетсем суйлавсене йертсе пымани, парти Обкомĕ парти организацийĕсем умĕнче отчот та тумапи пулнă. Пленум çапла шутлать: партин райкомĕсен районри парти пухăвĕнче отчот тупипех чарăнмала мар. Партин районри комитечĕн отчочĕсене пуçламĕш парторганизацисен пухăвĕсенче лартмала. ПСК(б)П Обкомĕн пур районсенчи парти пухăвĕсемпе конференцийĕсенче обиазательлă, çавăн пекех тата чылай пуçламĕш парторганизацисен пухăвĕсенче отчотлă докладсем лартмала.

Парти организацийĕсен парти органĕсен суйлавĕсене ирттернĕ чухне, большевикла критикăпа самокритикăна хăйулăн сарнă никĕс çинче, партин шалти демократине çирĕппĕн пурнăçа кĕртмеле, çапла парти аппаратне предательсенчен, парти органĕсене ăнсăртран кĕрсе кайнă скерсенчен, вĕçне çитиех тасатмала тата партилĕ-массăлă ĕçе татăклăн лайăхлатмала.

„Партин йертсе пыракан органĕсене суйласси партилĕ-политикăлă ĕçе малашне те пур майсемпе те хăпартса пырассишĕн, парторганизацисем массăсемпе çыхăнса тăрассине çирĕплетессишĕн тата парторганизацисен умĕнче тăракан политикăла-хуçалăхла задачăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн кĕрешнипе пулса иртмеле". (ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ йышăннă постановленирен).

Обком пленумĕ, ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн çак кăтартăвĕ çинчен асăрхаттарса, пур парторганизацисене те партилĕ-массăлă тата агитацилĕ-пропагандăла пĕтĕм ĕçе вăйлатса йама, кашни коммунисăн политикăла активлăхне пур майпа та ÿстерсе пыма, ăна политикăла воспитани парассине лайăхлатма тата политикăла сыхăлăха хăпартма хушать.

Пленум парторганизацисене ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн йанварти пленумĕн решенине вĕçне çити пурнăçа кĕртме, партилĕ ĕçĕн никĕсĕнче—партин кашни членĕ çине уйрăмăн пăхасси пулмала тума хушать.

Пленум оборонă ĕçне, массăсене интернационаллă воспитани парассине вăйлатма кирли çинчен асăрхаттарать.

Пленум пур райкомсене тата Шупашкар хули комитетне мĕн пур коммуниссемпе партире тăман массăсен тимлĕхне черетлĕ политикăла тата хуçалăхла задачăсене пурнăçа кĕртме мобилизацилеме хушать, пленум, уйрăмăн илсен, сăтăрла ĕçсен йулашкисене татăклăн палăртса пĕтерсе пыма, тăрă шыв çине кăлармасăр йулнă, сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес ĕçе хирĕç тăрассине организацилекен тăшмансене предприйатисенчен, колхозсенчен, организацисемпе учреждениесенчен тăпăлтарса кăларма кирли çинчен асăрхаттарать. Халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планне хисеп тата пахалăх йĕнĕпе те тултармала, йалхуçалăх ертелĕн уставне пиминлĕ пăсни те пулмала мар тумала, мĕн пур колхозсене çирĕплетме, йединоличниксене колхоза кĕртме, колхозсем, колхозниксем тата йединоличниксем государствă умĕнчи обиазательствăсене тÿррĕн те вăхăтра тултарса пыма, предприйатисемпе транспăрт промфинплана тултарма, суту-илÿве, халăха вĕрентес, сывлăха сыхлас т. ыт. ĕçсене те лайăхлатма пысăк ĕç туса ирттермеле. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене большевикла хатĕрленсе ирттермеле. Вăйлă тырпулшăн кĕрешме, çулпуçĕ Сталин йулташ çуллен 7—8 мĕлйард пăт тĕш тырă тăвасси çинчен панă кăтартăва пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме Тутар тата Мордва республикĕсемпе ăмăртăва тухса илнĕ обиазательствăсене большевикла пурнăçа кĕртмеле.

Çак задачăсене пурнăçа кĕртме тумали ĕçсен пит пысăк пахалăхне кашни ĕççыннине ăнлантарса памала, социалисăмла ăмăртăва, ударничествăна тата стахановла йухăма анлăн сармала.

Тăван Совет çĕршывĕн ырлăхĕшĕн парăнса ĕçлесе партин политикăла тата хуçалăхла директивĕсене пурнăçа кĕртсе пымала,—акă мĕнпе парти ĕçĕнчи кашни руководитĕл партин йертсе пыракан органĕсене çĕнĕрен суйламали тивĕçе кĕрешсе илнĕ.

ПСК(б)П Обкомĕ шансах тăрать: партин йертсе пыракан органĕсен суйлавне коммуниссем пурте активлă хутшăннипе, парти органĕсене чи çирĕп те хăватлă, Сталинла Тĕп Комитета вĕçĕмсĕр парăннă, хăйсен пĕтĕм вăйне, кирлĕ пулсан пурнăçне те парти ĕçĕн, коммунисăм ĕçĕн çĕнтерĕвĕшĕн пама хатĕр большевиксем суйланĕç.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене хатĕрленесси çинчен

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн VI-мĕш пленумĕ В. И. ДУБĂВ йулташ доклачĕ тăрăх йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн суйлавĕсем совет халăхĕн мораллĕ тата политикăлă пĕрлĕхне, вăл Ленин—Сталин партийĕпе уйăралми çыхăнса тăнине кăтартса пачĕç. Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ пит те чаплă çĕнтерÿ турĕ, хăйĕн хăватлă та никам çĕнтерейми вăйне, пирĕн çĕршывра социалисăм татăклăн çĕнтерĕнĕ никĕс çинче çирĕпленнĕ вăйне, пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартрĕ.

Партин Чăваш облăç организацийĕ, ПСК(б)П Сталинла Тĕп Комитечĕ йертсе пынипе, массăлă-политикăлă тата организацилĕ пысăк ĕç туса ирттерчĕ, ĕççыннисен активлăхне çĕклерĕ, хăй массăсемпе çыхăнса тăнине тата ытларах çирĕплетрĕ, революцилĕ сыхăлăха ÿстерчĕ, фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агенчĕсене тупса палăртса тата вĕсенчен хăйĕн речĕсене тасатса, рабочисене, колхозниксене тата совет интеллигенцине Ленин—Сталин партийĕ тавра тата тачăрах пĕтĕçтерчĕ.

ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче Чăваш республикĕнче суйлавçăсем хушшинче суйлав комиççисен членĕсем, агитатăрсем тата пропагандиссем пулса ĕçленĕ активиссем çĕнĕрен сахал мар палăрчĕç. Партири тата партире тăман пиншер большевиксем коммуниссемпе партире тăманнисен блок ĕçĕшĕн, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн массăлă-агитацилĕ тата пропагандисла ĕçе активлă хутшăнчĕç.

Анчах, суйлавсем хыççăн районри парторганизацисенчен нумайрахăшĕ массăлă-политикăлă ĕçе вăйсăрлатнă, вĕсем Сталин йулташ: „пысăк ăнăçусемпе пысăк çитĕнÿсем час-часах тимсĕр, каппайакан тата мухтанакан тăваççĕ", тесе асăрхаттарнине манса кайнă. Хĕрлĕ Чутай, Ишлей, Йелчĕк, Çĕнтĕрвăрри тата ытти районсенчи парторганизацисенче ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн суйлавĕсене ирттернĕ хыççăн массăлă-ăнлантарулă тата организацилĕ-политикăлă ĕçе вăйсăрлатнине, суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче активлă ĕçленĕ агитатăрсен, вулавçăсен, калаçусем ирттерекенсен пĕр пайĕ ĕçрен пăраннине, вĕсем суйлавçăсемпе çыхăнуне сахалланнине тата хăшпĕр çĕрте пачах пĕтсе ларнине çавăн па çеç ăнлантарма пулать.

ПСК(б)П Обкомĕн пленумĕ çакна паллă тăвать: партин уйрăм райкомĕсемпе пуçламĕш парторганизацисем суйлав вăхăтĕнче ÿснĕ партири тата партире тăман çĕнĕ активпа кирлĕ пек ĕçлемеççĕ, вĕсене йертсе пырас ĕçе хăйулăн лартмаççĕ, массă хушшинчи политикăлă ĕçĕн пуйан опытне организацилĕ майпа çирĕплетсе пымаççĕ.

Обком пленумĕ çакна палăртать: парти, совет, комсомол, профсойуз, хуçалăх организацийĕсем суйлава хатĕрленес ыйтусемпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. ПСК(б)П Обкомĕн пленумĕ—çав организацисен уйрăм руководителĕсен пулас суйлавсем çинчен тĕрĕс мар, сийенлĕ шухăшсем пур, тесе шутлать, вĕсем: „суйлавсене ирттернĕ опыт пур, çавăнпа пур ĕçсем те çăмăллăнах, хăйсем тĕллĕнех тенĕ пек пулса тăрĕç", тесе шухăшлаççĕ.

Парти организацийĕсен Жданăв йулташ çакăн пек кăтартса панине асра тытса тата çирĕппĕн пăхăнса ĕçлес пулать:

„...пирĕн парти организацийĕсен суйлав кĕрешĕвне хатĕр пулмала. Суйлавсем чухне пирĕн тăшманла агитацине тата тăшманла кандидатурăсемпе тĕл пулмала пулĕ. Çавă чăнах пулма пултарасси халех ĕнтĕ, çитес суйлавсене май, совета хирĕçле елементсем йăшăлтатма пуçлани палăрнинчен курăнать. Çĕнĕ Конституци панă уççăн майсемпе тăшманла елементсем усă курма хăтланнине хирĕç тăма пирĕн парти организацийĕсен пĕтĕмпех хатĕр пулмала.

Пирĕн çынсем тĕлĕрсе тапранкаланă вăхăтра, тăшмансем ĕнтĕ ĕçлеççĕ те, суйлавсене те çирĕп хатĕрленеççĕ" (ЖДАНĂВ йулташ ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн 1937 çулти февраль-мартри Пленумĕнче тунă докладран).

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен пулас суйлавĕсене хатĕрленес ĕçе пит пысăк вырăна хурса, парти тата совет организацийĕсен умĕнче тăракан политикăла задачăсем ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйлана кунранпа иртнĕ вăхăтра чылай анлăланнине, агитацилĕ тата пропагандăла ĕçрен ытларах ыйтмалине шута илсе, ПСК(б)П Обкомĕн пленумĕ çапла йышăнать:

(Йулашки 2-мĕш страницăра).

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитетĕнче

ССР Союзĕнчи аслă шкулсенче харпăрхăй тĕллĕн вĕренмели кунсем, вĕреннине хакласси тата аслă шкулсенче физкультурăна вĕрентесси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ аслă шкулсенче вĕренÿ кунĕсене чакарса, вĕсенче студентсене вăхăт харпăрхăй тĕллĕн вĕренмелли кунсем панине, [illegible] тесе шутлать, улăштармала тунă.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ пур кунсенче те, канмали кунсемсĕр пуçне, студентсен вĕренÿ занятийĕсене тивĕçлĕ вĕренÿ расписанийĕсем тăрăх туса пымалла тунă.

Çитес вĕренÿ çулĕнчен пуçласа пур аслă шкулсенче те студентсен пĕлĕвне тăватă тĕрлĕ отметкăпа хакламалла тунă („неудовлетворительно", „посредственно", „хорошо" тата „отлично" отметкăсем).

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ аслă шкулсенче вĕренÿ кунĕ варринче физкультура урокĕсем пулмала мар тесе хушнă. Физкультура урокĕсем, обшчежитисенче иртнĕ обиазательлă йĕркепех зарядкăсем тунисĕр пуçне, вĕренÿ расписанийĕ тăрăх [illegible] тата пĕрремĕш икĕ курсра вĕренекен студентсем çеç пама-[illegible]

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕнчен пуçласа физкультура [illegible]

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене хатĕрленесси çинчен

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн VI-мĕш пленумĕ И. В. ДУБАВ йулташ доклачĕ тăрăх йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

(Й у л а ш к и)

1. Парти организацийĕсене массăсем хушшинчи политикăла ĕçе, кашни ĕççынине политикăла влиянийе илмеле туса, тăтăшах туса пыма хушас. Суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче агитацилĕ-массăлă ĕçĕн тĕп содержанийĕ: РСФСР тата ЧАССР Конституцийĕсене, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене, ССР Сойузĕн пĕтĕм тĕнчери тата шалти лару-тăрулне тĕплĕн вĕренесси пулмала. Ĕççынисен йышлă массисене çитес суйлав кампанине ăнăçлăн ирттерме тата 1938 çулти хуçалăхла-политикăла задачăсене (çураки, финанссем, йавăç йухтарасси, ăш-какай хатĕрлевĕ т. ыт. те) ăнăçлăн тултарма мобилизацилемеле.

2. ПСК(б)П Обкомĕн пленумĕ партин Шупашкар хула комитетне, райкомсене тата пуçламĕш парторганизацисене РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене ирттерме хатĕрленес ĕçе сарса пынă чухне ĕççынисем хушшинчи политикăла ĕçĕн ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн суйлав кампанийĕ чухне пĕтĕмпех тĕрĕсе тухнă формисемпе тата меточĕсемпе — колхозсенче ушкăнăн тата уйрăм çынсемпе калаçусем ирттерни, пухусем, политкунсем, ыйтусемпе ответсен каçĕсем, çамрăксен, хĕрарăмсен, стариксен, килхуçи хĕрарăмсен уйрăм пухăвĕсем, вулав çурчĕсенче, колхозниксен çурчĕсенче, клубсемпе хĕрлĕ кĕтессенче ĕçлесси, çавăн пекех тата йала агитфургонсем, агитбригадăсем йарасси т. ыт. те — суйлав участкисенче, предприйатисенче анлăн уса курма хушат.

Иртнĕ суйлав кампанинче чылай парторганизацисен агитацилĕ ĕçĕнче пулнă çитменлĕхсене: агитатăрсене çителĕклĕ тĕплĕн суйласа илменни, агитацин пахалăхне йапăх тĕрĕслени, суйлав участкисемпе суйлавçăсем пурăнакан вырăнсенче агитаци ĕçне сарса йама, кандидатсемшĕн агитаци сарса йама, пичетлесе кăларнă лозунгсем, плакатсем, кĕнекесем, агитаци тумали тата ытти материалсене те çитерсе пама кайа йулни пулнине паллă туса, ПСК(б)П Обкомĕн пленумĕ пур парторганизацисене те çав йанăшсене шута илме, çитес суйлавсенче вĕсем пулмала мар тума хушат.

3. Иртнĕ суйлавсенчи опыт кăтартса панă тăрăх, суйлавсен ăнăçлăхне суйлав участкисенчи политикăлă тата организацилĕ ĕç татса парат—ПСК(б)П Обкомĕн пленумĕ ПСК(б)П райкомĕсене пурне те тата Шупашкар хула комитетне суйлавçăсем хушшинчи политикăлă ĕçе вĕсем пурăнакан вырăнсенче, урăхла каласан, пĕр çуртра, квартăлра, поçолкăра пурнакансен хушшинче сарса йама хушат.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене май йалта агитаци ĕçне тунă чухне колхозри пĕрлехи пухусене пухнипех чарăнмала мар, ăна уйхир ĕç бригадисенче те тата трактăр отрйачĕсенче те туса пымала.

Кашни суйлав участкинех агитатăрсен ушкăнне уйăрмала, вĕсен пуçĕнче агит-организатăрсем пулмала.

ПСК(б)П райкомĕсен суйлав участкисенче ĕçлеме уйăрнă агитатăрсене пурне те йатарласах курссемпе канашлусем урлă кăлармала Агитатăрсем пулса ĕçлеме коммуниссене, комсомолĕцсене, партире тăман тĕрĕсленнĕ учителсене, врачсене, агрономсене тата йалтипе колхозри актива хутшăнтармала.

4. Суйлав кампанине хатĕрленес ĕçе сарса парторганизацисен çывăх вăхăтра пурнăçа кĕртмели пысăк та паха задачăсем—округри тата участкăри суйлав комиççисене çынсене тĕплĕн суйласа палăртасси, Ленин—Сталин партин ĕçне, халăх ĕçне вĕçне çити парăннă, халăх хушшинче тивĕçлипе авторитетпа тата паллăлăхпа усă куракан çынсенчен депутата суйламали кандидатсене палăртас ĕçе пит тĕплĕн шухăшласа тăвасси пулса тăраççĕ: иртнĕ суйлав кампанинче уйрăм районсенче пулнă йанăшсем—суйлав комиççи членĕсене уйăрассине формалцнă тата механичĕски тунисем урăх пулмала мар тăвас пулат.

5. Чăваш республикинчи советсем, иртнĕ суйлавра организацилĕ тата политикăлă пысăк ĕçсем туса, массăсемпе çыхăнса тăрассине чылай çирĕплетрĕç тата анлăлатрĕç. Советсен, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен пулас суйлавĕсене май, иртнĕ суйлав кампанин пуçламĕшĕнче суйлава организацилĕ-техникăлă хатĕрленес йенпе (çынсене палăртасси, суйлавçăсен спискисене тăвасси тата суйлав докумĕнчĕсене сыхласа усрасси) пулнă йанăшсене шута илмеле.

Пленум советсене массăлă-политикăлă ĕçсене тата ытларах вăйлатма, организацилĕ-техникăлă йенĕпе суйлавсене вăхăтра та тĕплĕн хатĕрлеме, работниксене сăнаса вĕренме, йулташла тăрăшма, сисĕмлĕ пулма, хуларн тата йалти ĕççынисен жалăбисемпе сĕнĕвĕсене пурне те тăтăшах тата вăхăтра пăхса тухма хушат.

6. ПСК(б)П Обкомĕн пленумĕ çакна палăртат: облăçри комсомол тата профсойуз организацийĕсем, суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче массăла-ăнлантарулă тата агитацилĕ-пропагандăлă ĕçе активлă хутшăннăскерсем, ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн суйлавĕсем хыççăн çав ĕçе вăйсăрлатнă. ПССЛКС Обкомĕпе профсойузсен облăç комитечĕсене çак ыйтăва комсомол тата профсойуз организацийĕсенче сӳтсе-йавма, çак хĕрулĕ те хисеплĕ ĕçе тума конкретлă план палăртса хума хушас.

7. Республикăри тата районсенчи хаçатсем те ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн суйлавĕсем хыççăн массăлă-политикăлă ĕç ыйтăвĕсене çителĕксĕр çутатса пынă, çителĕксĕр çутатса пыраççĕ тесе шутласа, ПСК(б)П Обкомĕн пленумĕ республикăри тата районсенчи хаçатсен редактăрĕсене ĕççынисем хушшинчи массăлă-политикăлă ĕçĕн опытне анлăн çутатассине организацилеме хушат.

ЧАССР Çыхăну Управленин Радиокомитетпа пĕрле районсен тата округсен центрĕсенче радиовешчанин ĕçне кирлĕ пек йĕркелемеле,—районсемпе колхозсенче радиооборудованипе радиоточкăсене (радиоприйомниксем, питани, репродуктăрсем т. ыт. те), ĕçлеме хатĕр тумала, тата ЧАССР Çыхăну Управленин округсен центрĕсемпе суйлав участкисенче телефонсем тата почтă тăрăх çыхăну туса йĕркелемеле.

8. Ĕççынисем хушшинче тĕне хирĕç пропагандăна çителĕксĕр туса пынине тата Вăрçăлă Турăсăрсен Сойузĕн Тĕп совечĕ Вăрçăлă Турăсăрсен Сойузĕн районри совечĕсене оперативлă йертсе пыманнине палăртса, ПСК(б)П Обкомĕн пленумĕ Вăрçăлă Турăсăрсен Сойузĕн Тĕп советне çав ĕçе тĕпренех тӳрлетсе йама, тĕне хирĕç пропагандăна ĕççынни массисен ӳснĕ ыйтăвĕсем çине ответлесе пымала туса йĕркелеме, чиркӳ çыннисен, сектантсен тата вĕсен агентурин тăшманла агитацийĕпе татăклăн кĕрешсе пыма, ПСК(б)П райкомĕсене çав ĕçре Вăрçăлă Турăсăрсен Сойузĕн районти совечĕсене кирлĕ пулăшăва пама хушат.

ПСК(б)П Обкомĕн пленумĕ пур парторганизацисемпе пур коммуниссене те болщевикла сыхăлăха тата çӳлерех хăпртма, сăтăрлăх сийенĕсене пĕтерме татăклăн кĕрешсе пыма, троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла шпионсен, сăтăрçăсен тата çынвĕлеренсен тискерленсе кайнă фашисла бандине вĕçне çитийех тупса палăртма тата пĕтерсе хума хушат.

ПСК(б)П Обкомĕн пленумĕ Чăваш республикинчи партире тăракан тата партире тăман болщевиксене хăйсен речĕсене хамăрăн партипе халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ тавра тата тачăрах пĕтĕçтерме, парти массăсемпе çыхăнса тăнине тата ытларах çирĕплетме, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн суйлавне ирттерниччен тата лайăхрах та организацилĕрех ирттерме, социалисăм строителствинче çĕнĕ çитĕнӳсем тума чĕнет.

Ĕçре ӳснĕ маçтăр

Генадий Горшков Куславкка комбинатĕнчи типĕтекен цехра 1936 çулта ĕçлеме пуçланă. Ку таранччен йаланах грузчик пулса ĕçленĕ. Ĕçре пысăк тĕслĕхсем панă, обшчĕствăлă ĕçре активлă хутшăнса ĕçленĕ. Çав вăхăтрах хăйĕн пĕлӳне ӳстерсе пынă.

Çапла лайăх ĕçленине кура Горшков йулташа пысăкрах ĕçе куçарчĕç. Халĕ вăл çменă маçтăрĕ пулса ĕçлет. Савăнат вăл хăйне çавăн пек пысăк ответлă ĕç шанса панишĕн.

Горшков çмени кулленхи плана йаланах тултарса пырат. Рабочисем йуратаççĕ ăна, час-часах ун патне пулăшу ыйтма пыраççĕ.

Горшков 1917 çулта çуралнă, кăçал вăл Хĕрлĕ Çар ретне—социалисăмла тăван çĕршыва сыхлама кайма хатĕрленет.

Ив. Константинăв.

Францири çĕнĕ правителствă

(Пĕтĕм тĕнчери ыйтусем тăрăх)

Апрелĕн 10-мĕшĕнче Францире влаç çĕнĕ правителствă аллине кĕнĕ. Çĕнĕ правителствă пуçĕнче — Даладйе. Ку правителствă Францири социалисла партине йертсе пыракан Леоп Блщум правителстви хыççăн тунăскер.

Блщум йертсе пыракан правителствă влаçра пĕр уйăх хушши те тытăнса тăрайман. Унăн отставкăна тухмала пулнă. мĕншĕн тесен вăл финанс саккунĕн пройекчĕсене пурнăçа кĕртме ыйтнă, анчах та вĕсем арканса кайнă. Блщум сĕннĕ саккун пройекчĕсен шутне Францин шултра капиталне тата çĕнĕрен хушса хурас пунктсем кĕнĕ.

Блщум правителстви халăх фрончĕ пĕрлештерсе тăракан партисем çийне шаннă пулнă. Вăл, реакционерсем ăна хирĕç тăнă пулсан та, влаçра йулас тенĕ пулсан йулма пултарнă. Çакна тăвас тесен, унăн Францири реакцилĕ тата фашисла шухăш-кăмăллă буржуазине хирĕç тăмала пулнă. Вăл, массăсен ирĕкĕ çине тайанса ĕçленĕ пулсан Францин шалти тата тулти политики ыйтнă тăрăх туxса тăракан ĕçсене пурнăçа кĕртсе пыма пултарнă.

Анчах Блщум, Франци компартийĕ тата Францири ĕççынни массисем чĕннĕ пулсан та, Францири капитала хирĕç тăрасшăн пулман.

Çапах та Блщум правителстви отставкăна тухнин сăлтавне çиелтен пăхсан, унăн финанс саккунĕн пройекчĕсем арканса кайни пулсан, Блщум правителстви отставкăна тухнин чăн-чăн сăлтавĕ шитех те тарăнта.

Францири реакци Блщум сĕннĕ финанс саккунĕн пройекчĕсене хирĕç хыттăн тăнă, мĕншĕн тесен Францири реакцилĕ буржуази Францире халăх фронтне аркатса, хирĕçтерсе йарас тĕлĕшпе тахçанах кĕрешет ĕнтĕ. Францири чарусăрланса кайнă фашисла реакци халăх фрончĕ çине тайанса ĕçлекен правителствăна пĕтерсе хурас шутпа татăклă мерăсене пурне те йышăннă. Вăл вăрçă чĕртсе йаракансемпе — фашисла Германипе тата фашисла Полщăпа килĕшӳ тума хăтланат. Вăл Францире фашисла йĕрке туса хума хăтланат.

Даладйе туса хунă çĕнĕ правителствăна, халăх фрончĕн представителĕсем кĕнипе пĕрлех, халăх фронтне кĕмен партисен представителĕсем те чи пирвайхи хут кĕнĕ.

Францири реакцилĕ шучет, çĕнĕ правителствă сылтăмрисемпе реакцилĕ шухăшлă ретемсем çине тайанса ĕçлессине пĕлсе çĕнĕ правителствă тунине кăмăлласа кĕтсе илнĕ.

Ку правителствă хăйĕн составĕ тăрăх Франци халăхĕн шанчăкĕсемпе ĕмĕчĕсене татса параймаст. Францири коммунисла партин политбӳровĕ çĕнĕ правителствă тăвас тĕлĕшпе çапла сырнă пулнă: çĕршыв халăх ирĕкне кăмăлласа ĕçлекен, Францири ĕççынисен интересĕсем ыйтнине пурнăçа кĕртсе пыракан, Францири фашисла заговорщиксене—граждăн вăрçине чĕртсе йаракансене пĕр хĕрхенмесĕр айăплакан правителствă тума ыйтат. Пĕтĕм тĕнчери фашисăмăн ирсĕр ĕçĕсене пулăшса пыракан шултра буржуази елеменчĕсене хирĕç, правителствăн çирĕп мерăсем йышăнмала,—тенĕ.

Çакăн пек правителствă тума ыйтат те ĕнтĕ Франци халăхĕ, вăл ăна тăватех.

(ТАСС).

1938 çулхи çураки

Уй ĕçĕнче

ЙЕТĔРНЕ, апрелĕн 13-мĕшĕ (телефон тăрăх) Уй-хир йуртан тасалса пынă май нумай колхозсем кĕрхи калчасем çине клевĕр акма тытăнчĕç.

Йĕнĕшкушкĕнри „Труд“ колхоз 27 гектар, „Партин 17-мĕш çийĕсĕ“, „Завет Ленина“ колхозсем те клевĕр акас плана апрелĕн 11-мĕшне тултарчĕç.

Полщанкăри Кирăв йачĕпе тăракан колхоз пурĕ 108 гектар çине клевĕр акса хăварчĕ.

Апрелĕн 12-мĕшне пĕтĕмпе 12 колхоз 357 гектар çине клевĕр акса хăварчĕç.

Ку колхозсем çак кунсенчех çĕр писсе пынă май суха тума тухаççĕ.

Н. Цветков.

Ĕçпе ответлеççĕ

ЕЛЕК. Районра чăн-чăн ăмăртса ĕçлесси саралса пырат. Мартăн 20-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 5-мĕшне ситиччен ăмăртакан пур колхозсенче те пĕр-пĕрин ĕçне тĕрĕслесе тухрĕç. Пур колхозсенче те йалхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри сщочĕ чĕнсе каланине тата Тутарпа Мордва республикĕсемпе ăмăртăва тухса Чăваш республики илнĕ обйазателсвăсене ĕçпе ответлеме тăрăшаççĕ.

„Çĕнĕ çул“ колхоз Мăн-Тукташри колхозпа ăмăртса ĕçлет. Колхоз кăçал пĕтĕмпех 1-мĕш категорилĕ кондицилĕ вăрлăх акат. Çуракине пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнĕ. Сухалакансем, сӳрелекенсем, акакансем 25 колхозник агрокружокра вĕренеççĕ. Кунпа пĕрлех „Çĕнĕ çул“ колхозра РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренмели кружоксем те йĕркеллĕ ĕçлесе пыраççĕ. „Çĕнĕ çул“ колхоз членĕсем Мăн Тукташ колхозĕ йулса пынине палăртса вĕсене çуракине хатĕрленес ĕçре пулăшса пыма тытăнчĕç.

Йускассинчи „Социалисăм“ колхозпа ăмăртакан „Комбайн“ колхоз та çуракине лайăх хатĕрленсе тухаççĕ.

Вас. Йефремăв.

Вăрлăхсене типĕ майпа чӳхерĕç

ТРАК. Кушар йалсоветĕнчи Буденнăй йачĕпе тăракан колхозра çуракине тухма хатĕрленсе çитрĕç. Лашасене лайăх апат çине тăратнă. Конщухсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Колхозăн производствăлă планне колхозниксен аслă пухăвĕнче сӳтсе йавса çирĕплетнĕ. Кашни колхозник мĕнле ĕçре ĕçлемелине лайăх пĕлсе тăрат.

Колхозăн акмали вăрлăхсем пурте кондицилĕ. Вăрлăхсене икĕ хут шăтарса тĕрĕсленĕ хыççăн, 99,5 процент шăтни палăрнă. Кăçал вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех йаровизацилесе акаççĕ. Çак тĕлĕшпе курсран икĕ йаровизатăр вĕрентсе кăларнă. Йаровизаци тумали хатĕрсене пилĕк катка, 3 пичке, виçĕ термометр тата ытарласа пĕр ампар хатĕрленĕ. Халĕ çирĕм гектар çине акмалăх 40 центнĕр çурхи тулла препаратпа типĕ майпа чӳхесе хучĕç.

Çураки вăхăтĕнче кулщтмассăлă ĕçсене туса пыма кашни бригадăрах хаçат вулакансем, бригадăри стена хаçат редактăрĕсем уйăрса хунă.

Мак. Иванов.

Вăрнар МТСтанцинче

Пысăк сарайра краççынпа çуса тасатнă тап-таса трактăрсем ларaççĕ. Акă, кунтах Харитонăвă Йефросийа трактăр бригадин трактăрĕсем. Мишаков трактăрис бригадин трактăрĕсем те кунтах. Унăн бригади иртнĕ çулта кашни 15 лаша вăйлă трактăр пуçне 1235 гектар сухаланă. Вĕсемпе йунашарах Панфилăв трактăрисăн трактăрĕ.

— Кăçал иртнĕ çулхинчен малтарах йусаса пĕтертĕмĕр. 48 трактăра йусаса пĕтерсе çуса тасатса лартрăмăр. Çак кунсенчех çĕнĕрен 5 трактăр килмеле. Çапла ĕнтĕ 15 бригадă валщи трактăрсем çителĕклĕ. Çунтармалисен запасĕ 7 куна çитет. Халĕ трактăрсене кашнинех бригадирсен, трактăриссен аллине панă. Кăçал нумайтарах сухаласшăн бригадăпа бригадă, трактăриспа трактăрис социалисăмла ăмăртăва тухнă,—каласа парат аслă механик Николайĕв йулташ.

Трактăрсене йусаса пĕтерсен темиçе хут та сăнаса пăхнă.

Трактăрсем валщи 23 çейалка пур. Плугсемпе сӳресем çителĕклĕ, вĕсем пурте йусавлă лараççĕ. Трактăр бригадисем валщи 25 будкă туса хатĕрленĕ. Анчах будкăсенче вутхутма тимĕр кăмакасем çук-ха. Çунтармали йапаласене тăкса расхутлас мар тесе 10 насус хатĕрленĕ. МТС-ăн 6 автомашинă. Анчах вĕсенчен 5 машинă йусавлă мар-ха. Вĕсене хал щ çеç йусама тытăннă. Кăçал МТС 5 уйăхлăх курсран 42 трактăрис вĕрентсе кăларат. СТЗ-НАТИ трактăрпа ĕçлеме 23 çынна вĕрентсе кăларнă. Молотилкăсемпе ĕçлеме машиноведсен курсĕнче 28 çынна вĕрентнĕ.

Кунсăр пуçне Канашри механизаци шкулĕнче трактăр бригадирĕсене хатĕрлекен курсра 5 çын, комбайнерсене хатĕрлекен курсра 2 çын, шаферсене хатĕрлекен курсра 3 çын.

Çуркунне çитет. Васкас пулат. Трактăриссем çавна пĕлеççĕ. Вĕсем ырансенче хăйсен участкисене тухса кайаççĕ.

Ст. Улангай.

И. Тукташ

Шурă Розă

(К а л а в)

1.

Каçхине выртсан та, ирхине тăрсан та пĕртен-пĕр шухăш шĕкĕлчет Ахметăн чĕрине: мĕншĕн çав тери канăçсăр та çуна асаплантаракан йапала пулнă-ха вăл кăвар пек вĕри йурату? Мĕншĕн кашни йĕкĕтĕнех йун чăпкăрса вĕреме кĕнĕ тапхăрта мĕнле те пулин хĕре, пĕрпĕр çамрăк пикене йуратса пăрахмала пулнă? Шухăшлат Ахмет çакăн çинчен лăш курмасăр ир те, каç та. Шухăшлат те, çатма çинчи пекех ăшаланма тытăнат унăн пăлханса кайнă чĕри; анчах нийепле те тупса çитереймест вăл ни кăмăл хускалăвĕн тупсăмне, ни чĕре пăлханăвĕн сăлтавне. Çакна кăна лайăх пĕлсе тăрат Ахмет: ват пекех йӳçĕ иккен ăнман йурату, нийепле те кăларса пăрахма çук иккен ăна, пĕр вырнаçнă йапалана, чĕре ăшинчен...

Нумай та пулмаст, лăпкă кăна, нимĕн хуйхă-суйхăсăр пурнатчĕ Ахмет. Савăнса ĕçлетчĕ вăл хăйĕн трактăрĕпеле çĕçен хирте, вылщатчĕ-кулатчĕ, йурлатчĕ-ташлатчĕ, урăх нимĕн çинчен те шухăшласа чуна ыраттармастчĕ. Йуратат вăл вĕçĕ-хĕррисĕр хумханса выртакан уй-хире, йуратат хăйĕн пархатарлă ĕçне, йуратат тăван çĕршыва, сарлака та аслă пурнăçа. Анчах халĕ акă таçтан, кĕтмен туман çĕртен инкек сиксе тухрĕ те, нимĕн масасăр йапалапа çунса чĕрӳне кĕлентер... Ех, пурнăç та иккен!

Кунпала та килĕшнĕ пулĕччĕ-и тен Ахмет, анчах асран каймаст, ăшран тухма пĕлмест, çав кастарат вĕт мĕскĕне. Акă ларса пырат вăл халĕ те рулщ умĕнче, хăнăхнă аллисем хăйсемех çул тытаççĕ, куçĕсем вĕлтĕртетсе тăракан инçетеле тĕмсĕлсе пăхаççĕ.

Кĕрлет трактăр пĕр виçелĕ хăватлă кĕрлевпеле, татти-сыпписĕр пĕтĕрĕнсе тăсăлса йулаççĕ хыçалтан нӳрĕ суха кассисем. Чĕри кăна пĕр виçелĕн тапмаст Ахметăн, шухăшĕсем кăна суха кассен манерлĕн пĕр вĕçĕмрен тăсăлмаççĕ. Пĕр татăлаççĕ вĕсем, пĕр сыпăнаççĕ, пĕр йавăнаççĕ, пĕр сӳтĕлеççĕ, унтан каллех татăлаççĕ, каллех сыпăнаççĕ. Куç умĕнчех акă унăн шухă чĕрине тыткăна илнĕ хĕрĕн сăн-сăпачĕ. Хĕр—хĕрех: пысăк мар чечен кĕлеткелĕ, тăрăхларах та еревĕтлĕ питлĕ-куçлă, кăшт каçăртарах пĕчĕк сăмсалă тата çунса тухас пек йĕпхĕм-хура куçлă. Урăх нимĕн те çук. Ну мĕн ытлашши иленмели пур-ха ĕнтĕ ун çумĕнче? Мĕн ытлашши çунмали пур унăн? Çапах та, пыр та калаç ак, Ахметăн куçĕ умĕнчен те татăлма пĕлмест вăл...

„Ех,—тесе шутлат Ахмет хăй çине хăй тарăхса,—мана аттепеле аннe кăштах йапшартарах чĕлхелĕ туса йаман. Пĕлнĕ пулаттăм еп унăн кăмăлне йепле çунтармалине. Йуратмаст вăл мана“...

Вĕçленсе çитеймерĕ Ахметăн шухăшĕ,—сасартăк хыçалтан тахăшĕн хайар сасăпа кăшкăрса йани илтĕнчĕ.

— Ей, качча лайăх тыткала! Шăйрăк хăвартăн.

Вăл, хыçалала çавăрнса пăхрĕ те, хăйĕнчен аллă-утмăл палăшра трактăрне мĕкĕрттерсе килекен йулташĕ чышкипе йуна-йуна йатлаçнине асăрхарĕ. Трактăрне тăратрĕ, шăйрăкне кĕреçепеле тӳрлетсе хăварчĕ. Унтан участкă тавра тата тепĕр хут çавăрăнчĕ те йулашки кассине вĕçлентерсе, тарактăрне çул хĕррине илсе тухса тăратрĕ.

— Есĕ мĕн çывăрса тăранайман пек ӳрĕк-сӳрĕкĕн ĕçлетĕн пайан?—ыйтрĕ унтан хăйĕн йулташĕ Петук.

— Хам та пĕлместĕп, темĕн килсе хирĕнчĕ. Ăш çунат...—тавăрчĕ ăна хирĕç Ахмет халсăр çын пек мĕскĕн сасăпа.

—Пĕр-пĕр пике çунтармаст-и сан ăшна?—тăрăхласа сăмах хушрĕ лешĕ.

—Ан кул, Петук, ан тăрăхла...

—Кам-ха вăл вара, сан ăшна çунтараканскер?

— Çирĕм хут та калана еп сана.

—Киккăлщки-мăккăлщки кĕлетке, каçăр сăмса кукăр мăй... Ех-хе-хе-хе-хе! Йуратмаст вĕт вăл сана! Мĕн ăшна çунтаратăн уншăн? Вăл—врач, есĕ... Мĕн тутăр вăл санпала? Ес лучче йалти хĕрсенчен пĕр-пĕр кăтăкне çаклатса йар. Ан тив, çӳпçи çине хупăлчи пултăр.

— Ан кул, Петук... Йеленă Петровнă ун пек çын мар вăл,—ӳпкелешсе илчĕ Ахмет, йулташĕ тăрăхланипе кăмăлсăр пулса.

—Ун пек мар пулсан, чупту еппин выртса ун ури йĕрне. Тутинчен пурĕ-пĕр чуптутарас çук вăл сана!—çăвар туллин лаплаттарчĕ Петук, йулташĕн йуратулă кăмăлне нимĕн вырăнне те хумасăр.

— Ес, Петук, йаланах çапла... Пĕртте йулташ пек мар. Пулăшас чухне йурп ытларах çĕтĕлтеретĕн...—тата ытларах кӳренчĕ Ахмет.

— Ех, айван та иккен есĕ. Ну мĕнпе пулăшам-ха ап сана? Çыр ешшин сăвă ăна сумасуса, сăвăсем вулама йуратат тесçĕ ăна. Чĕлхӳ-çăварупа çавăрайманнине, сăвăпала çавăрăн тен, — ăс пачĕ Петук, нимĕн шутласа тăмасăрах. Петук канашĕ Ахметшăн хăйĕншĕн те вырăнлă пек туйăнчĕ. Вăл ӳпрем чĕрелĕ хĕрĕн кăмăлне чăнласах сăвăпала çавăрма шут тытрĕ, анчах та кун çинчен йулташне пĕлтерес мар тесе, сăмаха урăх йеннеле йуптарса йачĕ.

— Ех, йепле кăпка тăпра! Самай сарă тулă çĕрĕ!—кăшкăрса йачĕ вăл савăнăçлăн, сарлака аллаппипеле пĕр ывăç нӳрĕ тăпра ăсса чăмăртаса.

* *
*

Çуллахи каçсем питĕ кĕске пулаççĕ. Кай йенчен хĕвел анса пырат те мал йенчен шурăмпуç çуталса çухат. Сиссе те йулма çук çуллахи каçсем йепле иртсе кайнине. Çавăнпа тарăхаççĕ те иккен шухă чĕрелĕ качăсемпе хĕрлĕ питлĕ хĕрупраçсем, пайтах-пайтах каçсене чăлккăм куç хупмасăрах ирттерсе йама тивнипеле.

Ахмет ĕçрен тавăрăннă хыççăн ура çинчех апат çырткаларĕ те, хăвăртрах вăййа тухма хатĕрленме пуçларĕ. Чи лайăх тумтирĕсене, уйавран уйава тăхăнмали тавраш ĕсене кăларчĕ вăл кĕçĕр арчинчен. Çине саттин кĕпе, урине сарă хром ботинкă тăхăнса йачĕ, ботинкине тăла варрипе сăн курнакан пуличчен çутатрĕ, унтан сарлака хулпуççийĕ çине хура пустав пиншак уртрĕ те кăсйинчен пĕчĕк тĕкĕр кăларса, нумайччен хăй çинĕ тинкерсе пăхрĕ. Тăрмаланса тăракан çӳçне йĕпете-йĕпете майлаштарса выртарчĕ, чăпар галстăкне тӳрлетрĕ. Унтан, тĕкĕрне каллех кăсйине чиксе, урама тухрĕ.

Çав тери тӳлекĕн тĕлĕрет çуллахи лăпкă каç.

Тĕпсĕр шĕлĕтĕн сенкер-кăвак пуставĕ çинче, биллиард шарĕсем йевĕр çăлтăрсем сапаланса выртаççĕ. Тулса çитмен шупка уйăх хăравçă текерлĕк майраки пек чĕтренсе вăрман хыçнеле йăпшăнат. Урам тăрăх, йумахри улăп мĕлки майлăн, армак-чармак йăмрасен мĕлкисем тăсăлса выртаççĕ. Йал тулашĕнче, колхоз арман пĕви хĕрринче гармонщ сасси йанăрат—хĕрсемпеле качăсем вăййа пухăнă.

Ахмет, урама тухсан, унăн-кунăн пăхкаласа илчĕ те анатала йарăнчĕ. Анчах пĕр кил урлă та каçаймарĕ вăл, калла тавăрăнса, хăй выртса пурăнакан кĕлете чупса кĕчĕ. Креват айĕнчи арчине уçса пирус коробки кăларчĕ. Унтан шăрпăк чĕртсе çутатрĕ те коробкăран пилĕк ултă тĕслĕ значок суйласа илсе кăкри çине çыпăçтарса тултарчĕ. Вара, йапалисене малтанхи вырăна майлаштарса хумасăрах, васкаса çамрăксен вăййине чупрĕ.

Йепле аван иккен çуллахи йăпăщ каçсенче, талккăшпех нимĕн хускалмасăр йăлтăртатса выртакан пĕве хăррине, йешĕл пустав пек çерем çинче, хаваслă тантăшсемпе пĕрле тăрса вăйă каламашкăн! Йепле аван иккен вăйă картинче вĕри чĕрелĕ сар хĕрпеле йунашар тăрса, унăн çемçе аллине чăмăртамашкăн, кăмăла вылщантармашкăн çулăм пек вĕри йуна хумхантарамашкăн!

Çамрăклăх! Урăм-сурăм вăйлă санăн чăрсăр хăвату!

Ахмет вăйă карти тавра виçĕ хутчен çавăрăнчĕ те, куçĕпеле Ленăна шыраса тупса, кăшт айăккарах пăрăнса тăчĕ. Вăйăри çамрăксем ăна асăрхамарĕç, пĕр Петук кăна, йалти учителпе алла-алăн пыракан çамрăк врач йеннеле ытарлăн куç хĕссе кăтартса, йĕплĕ кулăпа йĕплерĕ. Ахмет унăн кулнине чĕре çумне илмерĕ. Лăпкăнах кĕтсе тăчĕ вăл çамрăксем вăйă каласа пĕтересси.

Кĕмĕл шăнкрав пек усă йур лăпкăн вĕçленчĕ. Вăйă карти пĕр самантлăха шăпланчĕ. Анчах купăççăн пӳрнисем вĕттĕн-вĕттĕн пускаласа ташă кĕвви ĕнкелентерсе йачĕç те, çамрăксем каллех икшерĕн-икшерĕн мăшăрланса ташлама тытăнчĕç. Çакна кăна кĕтнĕ Ахмет тӳрех Ленă умне пырса тăчĕ.

— Валщс...—тесе пăшăлтатрĕ вăл — сирĕн чи йуратнă ташăр. Йурат-тĕр сирĕнпе ташлăма?

Ленă хирĕçлемерĕ. Аллине Ахметăн тĕреклĕ хулĕ çине хучĕ те вăл, пĕтĕм кĕлеткийĕпеле ун çумнеле чăмăртанчĕ, вара вĕсем чĕввĕн-чĕввĕн шăвăнса тайанса кайрĕç. Ахмет ăна пĕтĕм чунхавалĕпе хăй çумне туртса илчĕ, урисене çĕре тĕкĕнтерме памасăр çавăрттарма тытăнчĕ.

—Йепле аван ташлатăн иккен есĕ, Ахмет!—пăшăлтатрĕ ун çаварĕнченех вĕриленсе кайнă Ленă, мăшăр куçне тӳпери чи çутă çăлтăр пек йăлтăртатарса.

—Ман сирĕнпе калаçмали пур... Асатма пырам-и—ыйтрĕ Ахмет, хăйне ырланипе хавхаланса.

— Мĕншĕн кунта мар?—пĕр тĕлĕнсе, пĕр шикленсе ун çине куçне сĕклерĕ Ленă.

— Аван мар кунта. Ĕмĕрлĕхех калас сăмахсем пур манăн... Ленă темĕне сиснĕ пек шартах сиксе илчĕ те унтан вĕçернес тесе кайала туртăнчĕ, анчах Ахмет ăна тата хытăрах тытрĕ.

2.

Вĕсем пулщница сат-пахчинчи шурă хурăн айĕнчи тенкел çине пырса ларчĕç.

—Йеленă Петровнă, сире ман сăмахăмсем кулăшла туйăнаççĕ-тĕр? — ыйтрĕ Ахмет йавăрăн сывласа.

— Çук, пĕртте апла мар. Анчах еп пачах та шухăшламан ун çинчен,—тавăрчĕ Ленă, çурма уççăн кулкаласа.

Парти пурнăçĕ

Шупашкарта партин йертсе пыракан органĕсен отчотпа суйлав пухăвĕсем пуçланчĕç

Парти комитечĕн отчочĕ

Апрелĕн 11-мĕшĕнче Йалхуçалăхĕн коммунисла аслă шкулĕнчи пуçламĕш парторганизацинче отчотпа суйлав пухăвĕ пулчĕ. Парторганизацинче 90 коммунис. Пухура 86 коммунис пулчĕç, 4 йулташ тивĕçлĕ сăлтав пирки пырайман. Парти членĕ Мартынăв йулташ пухăва парти билечĕсĕр пынă. Президиумпа çекретариата вăхăта нумайа тăсмасăр, йеркелĕ суйларĕç. Партком çекретарне Воробйов йулташа парторганизаци ĕçĕсем çинчен отчот тума пĕр сехет те 40 минут вăхăт пана. Прениre тухса калакансене 10 минут.

* * *

—Отчотпа суйлав пухăвĕ пулнă-ранпа çулталăк иртрĕ. Çак çулталăк хушшинче парторганизаци пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Парти Тĕпкомĕн феврал-мартри пленумĕ хыççăн епĕр парторганизацине троцкиссенчен, бухаринĕçсенчен, буржуалă националиссенчен тасатрăмăр. Парторганизаци татах çирĕпленчĕ, тет Воробйов йулташ.

—Анчах йанăшсем те пулнă. Халăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларнипе пĕрлех, ним айăпсăр тÿрĕ коммуниссенех „халăх тăшманĕ“ туса хунисем те пулнă. Çмирнов йулташа „халăх тăшманĕпе çыхăну тытаŧ“, тесе айăплама тытăннă. Никитин йулташа мĕнле сийрен тухни паллă мар тесе парти ретĕнчен кăларса пăрахнă. Тĕрĕсленĕ хыççăн ку йулташсем айăпсăрри палăрнă, вĕсене парти ретне таврăнă. Баимкинпа Горский преподавателĕсене ним айăпсăрах ĕçрен те, профсойуз членĕнчен те кăларнă. Ижейĕв коммуниса нимĕн тĕрĕслемесĕрех „троцкис“ тесе айăпланă, партирен кăларса сирпĕтнĕ. Парторганизаци коммуниссен ĕçĕсене тĕплĕн тĕрĕслемен, елекçĕсем хыççăн кайнă. Горбунов, Федарăв, Каткин елекçĕсем тÿрĕ ĕçлекен коммуниссем çинченех ПСК(б)П хула комитетне, парти Обкомне елеклĕ çырусем çырнă. Анчах тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, вĕсем кăтартнă фактсем пĕри те тĕрĕс пулман.

—Ку йанăшсене парти Тĕпкомĕн йанвар уйăхĕнчи пленумĕ кăтартса панă хыççăн тÿрлетме тытăннă. Хăшпĕрисем пленум решенисене тĕрĕс ăнланман. Елекçĕ йатне илтсрен хăраса халăх тăшманĕсемпе кĕрешессине вăйсăрлатнă. Парти Тĕпкомĕн пленумĕ политикăла сыхлăха тата çÿлĕ тытма хушаŧ. Çакна пĕр минутлăха та манма йурамаст.

Пĕр çулталăк хушшинче 8 çынна парти ретне илнĕ, 15 çынна кандидатран парти членне куçарнă. Камсем вĕсем ,мĕнле ĕçлеççĕ вĕсем, парторганизаци мĕнле пулăшаŧ вĕсене? Отчотран кăна пĕлме çук. Анчах паллă, парторганизаци парти кандидачĕсемпе, сочувствуйушчисемпе начар ĕçленĕ. Вĕсемпе 2 пуху туса ирттернипех лăпланнă.

Парти кандидачĕсем 49 çын. Пысăк çар. Вĕсемпе кулленех ĕçлени кирлĕ. Сочувствуйушчисен группинче 6 çын. Иртнĕ çулта та 6 çын пулнă. Ку вăл партире тăман активна ĕçлеменнине пĕлтерет. Шкулра 202 студент. Вĕсенчен партийĕ кĕме йурăхлă çынсем сахал мар. Рекомендаци ĕçĕнче те чăрмавсем пур. „Малтан ытти коммуниссем пачăр-ха, кайран вара епĕ те парăп“, тесçĕ хăшпĕр йулташсем.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче студентсем пит активлă ĕçленĕ. Анчах, парторганизаци ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн суйлавĕ хыççăн лăпланса ларнă.

Коммуниссем хăйсен политикăла пĕлĕвĕсене мĕнле хăпартаççĕ? Вĕсене пурне те парти вĕрентĕвне хутшăнтарнă-и? Кун çинчен отчотран пĕлме пулмарĕ. Воробйов йулташ хăйĕн отчотĕнче: „РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕрентес тĕлĕшпе пирĕн 74 пропагандис ĕçлеççĕ“, тет. Ку шута агитатăрсем те кĕреççĕ. Миçе агитатăр, миçе пропагандис, вĕсем мĕнле ĕçлеççĕ? Ку паллă мар. Воробйов йулташ отчотĕнчен çакна çеç курма пулаŧ. Платонăв йулташ парти историне вĕрентекен кружока йертсе пыраŧ. Кружокра 15 çын. Занятисем вăхăтра ирттеççĕ. Пешчорăв йулташ Строительсен клубĕнче ĕçлет. Бочкарйов йулташ иккĕмĕш çул ĕнтĕ музыкăна вĕрентекен училищăра парти истори кружокне йертсе пыраŧ. Йарукăв, Шадров пропагандиссем занятисене вăхăтра ирттермеççĕ.

—Пирĕн тĕп çитменлĕх—вăл пропагандиссен семинарĕсене йеркелемени. Пропагандиссем мĕнле ĕçленнине епĕр тĕрĕслемен, хула комитечĕ çине шанна, тет Воробйов йулташ.

Парторганизаци комсомол организацине те çителĕксĕр йертсе пынă. Комсомол организацийĕ йышĕ ÿсмест. Çулталăк хушшинче те икĕ çамрăка çеç комсомола илнĕ. 96 комсомолĕçран 9 çынна парти ретне куçарнă. Комсомол организаци çумне çирĕплетнĕ Куçмина йулташ çителĕксĕр ĕçленинчен те килнĕ ĕнтĕ вăл.

Шкул ĕçĕнче те çитменлĕхсем чылай-ха. Преподавателĕсем нумайĕшĕ урăх шкулсенче те ĕçленĕ пирки занятисене вăхăтра пымасçĕ. Хăш чух занятисем пулмасăр ирттисем те пулнă.

Йулашкинчен çакна каламала. Воробйов йулташ икĕ сехетлĕ отчотĕнче коммуниссем парти поручениссене мĕнле пурнăçлани çинчен калама сăмах тупаймарĕ. Çавăн пекех вăл парторганизацинчи уйрăм коммуниссен çитменлĕхĕсене палăртмарĕ.

Апрелĕн 12-мĕшĕнче парти комитечĕн отчочĕ тăрăх прени пычĕ. Ĕнер, апрелĕн 13-мĕшĕнче, парткома суйларĕç.

П. Перлов.

Кирпĕч савăтĕнчи парторганизацинче

Шупашкарти кирпĕч савăтĕнче коммуниссен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене ирттересси çинчен йышăннă постановленине сÿтсе-йаврĕç. Пуху пит активлă иртрĕ. Прение тухса каланă коммуниссем парторганизаци çатăрлăх сийенĕсемпе çителĕксĕр кĕрешнине палăртрĕç.

Шупашкар хуличе кашни çулах çĕнĕ чул çуртсем хутшăнаççĕ. Халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планĕ тăрăх, кăçал чул çуртсем татах нумай тумала. Анчах кирпĕч савăчĕ хăйĕн производствă планне тултарса ымасŧ. 1937 çулта савăтăн 9 мĕлйун кирпĕч туса кăлармала пулнă, 7 мĕлйун çеç туса кăларнă. Кирпĕч пахалăхĕ начар, тата брак нумай. Халхи вăхăтра кирпĕч сарайĕнче 150 пин кирпĕч брак вырташ.

Кирпĕч савăчĕн ĕçне йеркелесси руководителсенчен килет. Кунта руководителсем пĕрмайăх улшăнса тăраççĕ. 1937 çул хушшинче 8 директăр улшăннă.

Иртнĕ çулсенче савăтра парторганизаци пулман пирки партилĕ-политикăлă ĕç çителĕксĕр пулнă. Кунта парторганизацийĕ 1938 çулта йанвар уйăхĕнче çеç организациленĕ. Парторганизаци РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренме 8 кружок организациленĕ. Комсомолецсем политграмăтта шкулĕсенче вĕренеççĕ тата ытти те. 1938 çулта 5 комсомолĕца партине илнĕ, 2 çынна сочувствуйушчисен ретне илнĕ.

Анчах парторганизаци ĕçĕнче çитменлĕхсем те чылай. Коммуниссене пурне те парти вĕрентĕвне хутшăнтарман. Парти историне вĕренекен кружок пропагандис çук пирки ĕçлемест. Александрăв парторг хула комитетĕнчен пропагандис çирĕплетсе пама ыйтнă. Анчах хула комитечĕ ку ĕçре пулăшман. Çĕнĕ парторганизацисен опыт сахал. Çавăнпа кулленех вĕрентни, ĕçре пулăшни кирлĕ. Çакна халĕ те ăнланса çитмен-ха. Ку уйрăмах хула комитечĕн инструкторне Депутатăв йулташа тивет. Кирпĕч савăчĕ унăн участкине кĕрет. Вăл савăтра мĕн пурĕ те пĕр хут çеç пулнă.

Коммуниссен пухăвĕ партилĕ-политикăлă ĕçе вăйлатма, савăтăн 1938 çулти производствă планне ирттерсе тултарма тумали ĕçсене палăртса решени йышăннă.

(„Чăваш Коммунĕн“ корр.)

ШАНКАРТАМ, ПСК(б)П райкомĕ март уйăхĕнче агитатăрсен вунăкунлăх курсĕнчен 70 çын вĕрентсе кăларчĕ. Вĕренсе тухнисем пурте йалсенчи, колхозсенчи ĕççыннисене РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене тата совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блока“ суд тунă процесăн материалĕсене ăнлантарса парас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Çурçĕр Китайран килнĕ çыру

„Ейшна“ йатлă журналăн апрелри тухнă номĕрĕнче Çурçĕр Китайран Йапони цензури аллине лекмесĕр килнĕ çыру пичетлесе кăларнă. Çурçĕр Китай,—тесе çыраŧ автăр,—халхи вăхăтра Йапони агрессине хирĕç тăрассин центрĕ пулса тăнă. Чăннипе илсен йапонецсем вăл крайа контрол туса сăнаса тăма пултараймаççĕ. Вĕсем чукунçулсем çинче, пысăк хуласенче тата шоссе çулĕсем çинче кăна хуçаланса пурăнаççĕ. Ытти вырăнсенче йапонецсем пысăк отрйадсемпе кăна тухса çÿреççĕ, çапла вĕсем налуксем пухса, Китай халăхне çаратса çÿреççĕ йе партизансен отрйачĕсене йĕрлеме тухаççĕ. Шанçире Датунпа Таййуан хушшинчи чукунçул йапонецсен контролĕнчен тухнă, мĕншĕн тесен Китай çарĕсен чаçĕсемпе партизансем унти чылай станцисене туртса илнĕ, нумай вырăнсенче çула çĕмĕрсе тăкнă.

Таварсем турттарса çÿресси тахçанах чарăнса ларнă. Тахçан пысăк хусканулă пулнă крайра хуçалăх пурнăçĕ чарăнса ларнă. Хресченсен кредитлă общĕствисем арканса пĕтнĕ. Пасарсем пушанса йулнă, магазинсем хупăннă. Хресченсен сутас тесен те нимĕн те çук: апат-çимĕç таврашне йапонецсем çаратса пĕтернĕ, хресченсем вăрлăхсăр тăрса йулнă, уйхирсене акмаççĕ.

Автăр çамахĕсем тăрăх, унти халăх выçлăх умĕнче, вилес пĕтес вăхăт умĕнче тăраŧ. Çурхи шывсем нумай инкек кÿме пултараççĕ, мĕншĕн тесен йуханшывсем çинчи кĕперсемпе çирĕплетнĕ вырăнсене çĕмĕрсе пĕтернĕ.

Йапонецсем Китай халăхне çаратаççĕ çеç мар, тата вĕсем китайецсем хушшинче сийенлĕ йапаласем сараççĕ. Китай правительстви опиумпа суту-илÿ тума чарса лартнă пулнă, хал вăл суту-илÿ çĕнĕ рен саралса пыраŧ. Йапонецсем опиума пур çĕрте те сараççĕ, Çурçĕр Китайа нумай опиум илсе пыраççĕ, халăха ирĕксĕрлесех опиум тумали макăн актараççĕ. Опиумпа суту-илÿ тăвакансене тĕрлĕрен çăмăллăхсем параççĕ. Опиум туса хатĕрленĕшĕн унпа суту-илÿ тунăшăн хупса хунă 800 çынна нумайăх пулмасŧ тĕрмерен кăларнă. Йапонецсене çивчĕн хирĕç тăракан халăх партизан отрйачĕсене анлăрах хутшăнса пыраŧ. Нацилĕ-револуцилĕ 8-мĕш çар агитатăрĕсем уйрăмăнах ăнăçлăн ĕçлеççĕ. Вĕсем хресченсене вăрçă искусствине вĕрентеççĕ. Партизансем чукунçулсене çĕмĕреççĕ, пуйăссене çул çинчен сирпĕтсе йараççĕ, йапонецсен пĕчĕк отрйачĕсене пĕтереççĕ, кайран вара нимĕн те пулман пекех хăйсен йалти ĕçĕсене тума таврăнаççĕ. Йапони пуйăсне „крушени“ пулни çинчен, партизансен çĕнĕ тапăнăвĕ çинчен хыпар илмесĕр Бейпинра пĕр кун та иртмест. Ăс-пуçа çухатнă йапонецзахватчиксем партизан йухăмне пĕтерсе лартас шутпа, çав крайри пур йалсене те çунтарса пĕтерме тăрăшаççĕ. Анчах вĕсен тискĕр-кайăкла ĕçĕ пачах урăхла резултат параŧ. Хĕçпăшал—захватчиксенчен сыхланмали пĕртен-пĕр хатĕр иккенне халăх вăйларан вăйларах ăнланса пыраŧ.

Йулашкинчен çыру автăрĕ çакна паллă тăваŧ: Йапонецсене Китай халăхĕн пур сийĕсем те пит вăйлăн курайманççĕ, тет.

(ТАÇС).

Пупсен мăнкунĕ—çураки чăрмавĕ

Халхи вăхăтра пирĕн умра çуракине болшевикла ирттерес, вăйлă тырпул туса илес задачăсем тăраççĕ. Халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планĕ тăрăх, вăтам хисеппе, республикăра гектартан 100 пăт тĕштырă туса илмеле. Ун çинчен йалхуçалăхĕнче малта пыракансен сйочĕ те çирĕп каласа хăварчĕ. Чăваш республикĕ Тутар тата Мордва республикĕсемпе тунă социалисăмлă ăмăрту догăвăрĕ тăрăх: „гектар пуçне 100-шер пăтран кайа мар тĕштырă туса илмеле“, тесе обйазательствă илнĕ. Çав догăвăртах: „ир акмали тĕштырă кулътурисене 6—8 кун хушшинче акса пĕтермелле“ сăмах панă.

Кăçалхи çул пирĕн йалхуçалăхĕнче Сталин йулташ 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илесси çинчен кăтартса панине пурнăçа кĕртессишĕн мĕн пур вăйа хурса болшевикла кĕрешмеле.

Анчах çак задачăсене пурнăçа кĕртес ĕçре чăрмантарма пултаракан сăлтавсем те пур-ха. Акă, сăмахран, çураки ирттернĕ вăхăтра, йалхуçалăхĕнче хĕрсе ĕçленĕ вăхăтра, тĕн праçникĕ—пупсен, кулаксен, капиталиссен мăнкунĕ килет. Паллах ĕнтĕ, епĕр тимсĕртерех пулсан, çав авалхи йăла—пупсен мăнкунĕ пирĕн ĕçе пысăк сăтăр кÿме пултараŧ. Çуракине кĕске срукрах ирттермеле, колхозниксем кăна тума пур йенчен те хатĕр пулмала. Колхозшăн çураки вăхăтĕнче кашни сехет, кашни минут хаклă. Çав тери хаклă вăхăтрах турра ĕненекен хресченсем (колхозниксем те, йединоличниксем те), авалхи йăлана пăрахаймасăр, чиркĕве çÿреççĕ тата ĕçкĕ-çикĕне парăнаççĕ. Хăшпĕрисем пĕтĕм мăнкун ернипех уралаймаççĕ, кун пек чух вара çав мăнкунăн ирсĕр йенĕсем уйрăмах сисĕнмеле куç умне тухса тăраççĕ. Ĕçсе çÿрекенсем ĕçе тухмаççĕ, йе пĕр-пĕрипе вăрçаççĕ, тÿпелешеççĕ, сураналанса пĕтеççĕ, хăш чух тата вилекен те пулкалаŧ.

Халăх хушшинче турра ĕненекен çынсем сахал мар-ха. Тĕн сĕрĕмĕнчен тасалакан çынсем çулран-çул хушăнса пыраççĕ пулин те, кивĕ йăла хăйĕн сăнчăрĕпе нумайĕшне тăлласа тăраŧ. Политикăпа хуçалăх кампанийĕсене ирттернĕ çĕрте кăçал раштавпа çăварни чăрмантарса тăни питĕ те паларчĕ. Çăварни кунĕсенче хăшпĕрисем ерни-ернипех ĕçкĕре çÿренĕ пирки, вăрман хатĕрлевĕпе чукунçул тăвас ĕçсем кайа йулса пычĕç, ун çинчен халĕ кашни колхозник пĕлсе тăраŧ.

Йалти политикăлă-массăлă ĕçе йапăх организациленĕ пиркийех, хăшпĕр районсем государствă умĕнчи ытти обйазательствăсене те тултараймарĕç.

Тĕн праçникĕсем халăхшăн нихăçан та усăлă пулман. Патша саманинче пупсем помещиксемпе капиталиссен влаçне çирĕплетесшĕн чан çапса йантратнă, халăха улталама чиркĕве чĕннĕ. Тĕн праçникĕсем пупсене пуйма май парса пынă: вĕсем килĕрен çÿресе тем чул укçа, çăмарта, тырпул пухнă, чиркÿре кĕлтунă вăхăтра та темĕн чул тупăш тунă. Патша саманинче (1913 çулта) чиркÿ организацийĕсем 185 мĕлйун тенкĕ таран тупăш илсе тăнă, паллах унта халăх укçи кайнă. Государствăпа чиркÿ тачă çыхăнса ĕçленĕ. Патша влаçĕ чиркĕве пĕрмайăх пулăшса пынă, çавăнпа та „çÿлте турă, çĕр çинче патша“—тесе пуççапнă пупсем. Чиркÿпе експлоататăрсем пĕр ĕç тунă: ĕçхалăхне, рабочисемпе хресченсене ĕмĕр-ĕмĕрех пусмăрта, тĕттĕмре експлоататăрсене пăхăнса пурăнма вĕрентнĕ. Мăнкун праçникĕ вăхăтĕнче пупсем ерçиппелех чиркĕве кĕнĕ, „аслă“ праçник тесе халăха улталанă.

Аслă Октйабĕр револуцийĕ пулнăранпа пирĕн çĕршывра мăнкунпа асăнса ирттерекен граждансем сахалланса пычĕç. Халăх тĕн сĕрĕмĕнчен куллен-кун тасалса пыраŧ. Çапах та, ĕтем ăстăнĕ пурнăç никĕсĕнчен кайараххăн улшăнса пынă пирки, совет гражданĕсем хушшинче тĕн сĕрĕмĕнчен усăлса çитмен çынсем чылай-ха. Сĕрĕмĕн йулашкийĕсемпе халăх тăшманĕсем усă курма пăхаççĕ, турра ĕненекен хăшпĕр çынсене хăйсем майлă çавăрса, тĕрлĕ контрреволуцилĕ ĕçсем тăваççĕ. Мăнкун кунĕсенче колхозниксем ĕçе тухманни, ĕçкĕ-çикĕре çÿресе вăхăт ирттерни, вăл халăх тăшманĕсемшĕн кăна усăлă. Çавăнпа та, мăнкун праçникĕ социалисăмлă хуçалăха мĕнле сăтăр тума пултарни çинчен, çуракине чăрмантарса пыни çинчен пирĕн болшевикла агитатăрсем колхозниксемпе йединоличниксене вырăнти фактсемпе, примерсемпе тĕплĕн ăнлантарса памала. Турра ĕненекен çынсем хушшинче уйрăмах вăйлăн ĕçлемелле. Политикăлă-массăлă ĕçе вăйлатмала. Пирĕн республикăра кулътурлă вăйсем сахал мар. Районри интеллигенци, йалти учителсем, врачсем тĕне хирĕç кĕрешес ĕçре вăйлă отрйад пулса тăмала. Райком сумĕчи пропагандиссем, агитатăрсем çак ĕçре авангард пулса ĕçлемелле.

ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйланă вăхăтра, районсенче агитацине пропагандă ĕçне вăйлатнă майпа, тĕне хирĕç кĕрешес ĕç те самайăх сĕкленнĕччĕ. Халĕ ак епĕр РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленетпĕр. Пирĕн иртнĕ ĕç опычĕпе усă курса, тĕне хирĕç кĕрешес ĕçе болшевикла организацилемелле.

Кашни йалсоветĕнче вулав çурчĕсем пур, анчах çав çуртсем тĕне хирĕç пропагандă çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхмаççĕ. Районти çутĕç пайĕсен инспектăрĕсем ку ĕçе йертсе пымаççĕ. Йалти кулътурлă вăйсемпе усă курма пĕлмеççĕ. Турăсăрсен организацисем халĕ кашни районтах пур, çапла та, турăсăрсен облаçри сийĕсĕ иртнĕ хыççăн та, вĕсен ĕçĕнче тимĕçлĕ улшăнусем курăнмаççĕ-ха. Чылайĕшĕсем лăпланса ларнă.

Мăнкун праçникĕ—сăтăрлă тĕн праçникĕ. Мăнкуна хирĕç кĕрешес ĕç—пĕр-ик кунлăх кампани мар. Мăнкуна хирĕç администратăвлă йĕркепе кĕрешме çук, политикăлă-массăлă ĕçе вăйлатса, пропагандăпа агитацине болшевикла тĕрĕс организацилесе, пупсен мăнкунне хирĕç вăйлăн кĕрешмелле, виççĕмĕш пилĕкçуллăхăн пĕррĕмĕш çуракине болшевикла ирттермелле.

М. С. Цветков.

Зайом укçине пухас пулаŧ

ТĂВАЙ. Районри чылай колхозсем „ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетмели зайом“ укçине тÿлесе татрĕç. Мичурин йачĕпе тăракан колхозра зайом уполномочĕннăйĕ Йегорăв йулташ йаланах халăх хушшинче совет зайомĕсен усси çинчĕн ăнлантарса параŧ. Çавна пула апрелĕн 1-мĕшне колхозниксем пурте хăйсем çырăнна зайом укçине тÿлесе татрĕç.

„Çăлтăр“ колхозри Çпиридонăв бригадир хăйĕн бригадинчи колхозниксене тĕнчери лару-тăру çинчен, хамăрăн социалисăмлă çĕршывăн зайомĕсем çинчен доклад туса пачĕ. Çакăн хыççăн колхозниксем хăйсем çыраннă 775 тенкĕ зайом укçине тÿлесе татрĕç.

Çавăн пекех тата Шмидт йачĕпе тăракан колхозăн 1-мĕш бригадирĕ С. Чернов та, зайом 360 тенкĕлĕх сарнăскер, укçине пĕтĕмпех пухрĕ. Вырăс Нарвашра Банифатйев, Абрамăв, Феофанăв тата Волкăв йулташсем тăрăшса ĕçленипе зайом укçине пĕр кун хушшинче 386 тенкĕ пухнă. Çакăн пек паха опытсем районра татах та пур.

Анчах вăл опытсене ытти йалсоветсене куçарма шутламан.

В. Лазăрĕв.

—Кунта шухăшласан та нимĕн ĕç те тухас çук. Паллах, врача трактăрис тÿсĕ пулни килĕшмĕ ĕнтĕ. Сире валли хăвăр пек нумай вĕреннисем те темĕн чухлех. Еп сире айăпламастăп, анчах йуратма та пăрахаймастăп. Çакă кăна...

—Тен, еп сана йурататăп та пулĕ?—сасартăк ун йеннелле çавăрăнса ларчĕ Ленă.

Самантлăха салхуланнă Ахметăн сăнсăпачĕ тăрукăх хĕвел пек йалтăртатса çуталса кайрĕ те, вăл хăй сисмен хутранах Ленă аллине хĕрÿлĕн тытрĕ.

— Чăн калатăр-и, Йеленă Петровнă?

Çамрăк хĕр татăклăн тавăрса калас вырăнне, темшĕн ытарлăн кулса йачĕ.

— Айван иккен есĕр, Ахмет! Ун çинчен сăмахпа калаçаççĕ-им вара? Чĕрепе кăна туйаççĕ ăна, ăшри сисĕмлĕхе,—терĕ вăл.

— Çук, еп хам шухăшсем çинчен йаланах сăмахпа калама йурататăп,— тавăрчĕ Ахмет.

— Анчах хитре сисĕмсем хитре сăмахсемпе ăнлантарса пăрсан çеç чĕрене тивеççĕ,—терĕ Ленă йуптарса.

Ахмет ăна ăнланчĕ. Ăнланчĕ те, хăй çырнă сăвва аса илчĕ. Тĕл килнĕ пек чух вăл ăна çакăнтах вуласа пама шутларĕ.

— Итлетĕр-и, еп сире пĕр сăвă каласа парам?—терĕ вăл, сасартăк ура çине сиксе тăрса.

— Мĕнле сăвă?—ыйтрĕ Ленă, унăн куçĕнчен ĕненчĕксĕррĕн пăхса.

— Хам çырнă сăвă. Итле!

Ирхине еп тухрăм, хĕвел куртăм,
Сăвă хĕвел есĕ пулĕ, терĕм.
Чунăм, хура куçăм!
Каçхине еп тухрăм, уйăх куртăм,
Çавă уйăх есĕ пулĕ, терĕм.
Чунăм, хура куçăм!..

Çав тери кăмăла кайрĕ Ленăна Ахметăн сăвви. Вăл хулпуççийĕсене чĕтрентерсе кулса йачĕ те Ахмет çумне пырса тăчĕ.

— Интереснă, пит интереснă. Трактăрис çеç мар, поет та иккен-ха есĕ! — кулса кайрĕ ун шăнкărав пек кулли сат пахчинчи тÿлек йавăççем хушшипеле.

— Ан кул, Ленă,—кăмăлсăрланчĕ Ахмет.

— Çук, кулса мар, тĕрĕссипех калатăп. Çырса илме йураŧ-ши кăна?

— Манпăла ăнпăрах кăмăллă пулсан, еп хамах та çырса парăп. Кăна çеç мар, нумай-нумай...

— Чăнах-и? Мĕнле калаçас пулаŧ вара санпала?

— Йеленă Петровнă...—ыталама пикенчĕ ăна Ахмет. — Мĕншĕн есĕр мана çав терийех çунтаратăр.

Ленă Ахметăн аллине картах сирсе йачĕ те тенкел çине ларчĕ. Ахмет кÿреннĕ пек пулчĕ, анчах та пĕр пуçланă сăмах çиппине татма шутламарĕ.

—Йеленă Петровнă, еп сире вăйпа йураттарма шутламастăп. Манран нимĕн чухлĕ те ан хăрăр,—терĕ вăл, унпала йунашар пырса ларса.

Çамрăк хĕр ку сăмаха хирĕç нимĕн те тавăрса каламарĕ. Калаçăва урăх йĕрпе пăрса йарас тесе, вăл каçхи шăплăхăн поезийĕ çинчен чĕвĕлтетме тытăнчĕ.

— Йепле аван иккен кĕçĕрхи çанталăк!

— Çапла... аван — терĕ Ахмет, ун хыççăн илтĕни-илтĕнми сасăпа.— Аван, анчах нимĕн чухлĕ те савăнтармасŧ вăл мана.

— Мĕншĕн? — тĕлĕннĕ пек пулчĕ Ленă.

— Мĕншĕн тесессĕн йуратмастăн ес мана.

— Йуратап тесе, мĕн тăвас пулаŧ-ха вара манăн?

— Еп сана ĕмĕр пĕрле пурăнас мăшăрăм тăвасшăнччĕ... — терĕ Ахмет шăппăн. Ку сăмахсем ун чĕлхи çинчен аран-аран кăна татăлса тухрĕç.

Ленă шартах сикрĕ те ури çине тăчĕ.

— Ан тĕлĕнтер-ха, Ахмет. Качча кайас шухăш асра та çук хал манăн. Сана та вăл шухăшпа çупма çунмастăп. Ун çинчен мар шутламала хал санăн, вĕренесси çинчен, малала ÿсесси çинчен шухăшламала,—терĕ вăл хĕрÿленсе кайса.

Ку сăмахсем Ахметшăн çунакан вут çине краççин сапнă пек кăна пулчĕç. Вăл Ленă сăмахĕсене пĕтĕмпех хăйĕнчен мăшкăлани вырăнне йышăнчĕ те тем пек пăшăрханчĕ. „Нимĕн вырăнне те хурасшăн мар. Ман хура аллăмран тухнă çăкăра çийетĕн вет есĕ“... — йĕпиеме пуçларĕ ун кăмăлне вĕчĕрхенÿлĕ шухăш. Çапах та вăл хăйĕн чĕрине тыткăна илнĕ хĕре йăвăр каласа татса кÿрентерме хăйулăх çитереймерĕ. Пĕр шухăш, хăйĕнчен урăх култарас мар шухăш, уçăн йĕркеленчĕ унăн пуçĕнче.

— Еп сан патна хамăн çунса тăракан чĕреме çара аллăн çĕклесе килтĕм, ес унăн вĕри хĕлхемне сÿнтересшĕн пултăн... Сывă пул!..—терĕ вăл, ури çине тăрса.

Ленă, çемçе кăмăллă качăн кÿренÿне туйса илсе, çавăнтах ăна лăплантарма тăчĕ, анчах Ахмет ун çине çавăрăнса пăхмасăрах, пуçне чиксе, пахчаран сĕнксе тухса кайрĕ.

Ленăн чĕрине темĕнле ÿкĕнÿ туйăмĕ выртса йулчĕ.

Пахча шăп. Шăпăрт сасă та кăлармасŧ улма пахчи...

3.

Ытла та сисĕмлĕ йапала иккен хĕрарăм кăмăлĕ. Ачашласан — çемçелеŧ, кÿрентерсен — пăлханаŧ, ÿпкелешсен—хуçăлаŧ.

Ленă тем самантченех вырăнтан хускалмасăр тăчĕ. Вăл хăйĕн кăмăлне ыраттаракан сисĕме тÿрех туйса илеймерĕ,пахчаран Ахмет йăвăррăн утса тухса кайнă хыççăн тин çав сисĕм пăчăртатса йÿççе хăпарчĕ. Нимĕнрен малтан, пĕр айăпсăр йĕкĕте ахалĕренех пăшăрхантарса кăларса йани аван мар пек пулчĕ. „Мĕншĕн еп ăна пĕр ăшă сăмах та тупса калаймарăм-ха? Мĕншĕн вутри пек çунса тăракан чĕрене лăплантармалăх çепĕç кăмăл тупаймарăм?“ Ленă Ахметăн йулашки сăмахне аса илчĕ: „Еп сан патна çунса тăракан чĕреме çара аллăн çĕклесе килтĕм“... Аса илчĕ те, çав çунса тăракан чĕрелĕ йĕкĕт ăна, сисĕнкĕсĕр сивĕ етем вырăнне шутланă пек туйăнчĕ. Вара вăл çак самантрах хăйĕн йăнăшне тÿрлетме кирлине астурĕ.

— Чĕресĕр етем епĕ. Кайам та халех каçару ыйтам Ахметрен, каласа парам еп ăна хăйĕнчен те ытларах йуратма пултарни çинчен,—терĕ вăл ăшри пăлхавне пусарас шутпала. Унтан вăл чечек клумби çине кĕрсе чи илемлĕ пысăк розă шыраса тупрĕ те татса илмешкĕн ик пÿрнипе хĕстерсе тытрĕ. Ăна темле поетăн сăвви аса килчĕ: „Çурхи хитре чечексене татса кăкăр çумне тиретпĕр“... Вăл хал усăлса саралнă чечеке тутипеле сĕртĕнчĕ, унăн пĕр çулçине те çĕре ÿкерес мар тесе, ачашшăн татса илчĕ. Татса илсенех, розă ăшĕнчен унта çĕр каçнă пыл хурчĕ нăрласа вĕçсе тухса кайрĕ.

* * *

... Алăкран вăраххăн тăкăртаттарса шакканине хирĕç нимĕнле сасă та илтĕнмерĕ. Ленă татах шаккарĕ, татах итлерĕ.

— Ахмет!—тесе чĕнчĕ вăл шăппăн.— Ахмат, çывăратăн-и ес?

Ответ çук. Ленă пĕчĕк кĕлет алăкне икĕ аллипе тăксе йари уçса йачĕ те шала кĕрсе тăчĕ.

— Ахмет! — кăшкăрса йачĕ вăл койкă çинче минтересем хушшине пуçне чиксе шăппăн йĕрсе выртакан йĕкĕте курсассăн—Ахмет, тархасшăн каçар мана. Айăплă епĕ санăн умăнта, хурлантартăм сан чунна, ыраттартăм чĕрÿне. Каçар, Ахмет...

Ленă койкă çине ларчĕ те, Ахметăн пуçне çÿлеле çĕклерĕ. Ахмет сасартăк ури çине сиксе тăчĕ, çапаланса кайнă куçĕсемпе Ленă çине пăхрĕ, икĕ чышкине çÿлеле çĕклесе, кăшкăрса йачĕ:

— Таврăп! Таврăп! Хамшăн мар, пиччешĕн çеç мар, тăван çĕршывăмшăн таврăп!

Шартах сикрĕ Ленă хăйĕн куçĕсем Ахмет куçĕсемпе тĕл пулнă хыççăн. „Вăл мана кураймасŧ, мана ылханаŧ“,— тесе шутларĕ вăл. Ахмет çăварĕнчен сирпĕнсе тухнă сăмахсенчен пĕртен-пĕрине кăна ăнланса йулчĕ. Халĕ уншăн Ахмет хăйне йуратаŧ тесе шутлассин тĕсĕ те йулмарĕ. Ахмет чĕрине çунтаракан хĕр пек мар, етемĕн чирне, асапне сыватма тивĕç тухтăр пек туйса илчĕ Ленă хăйне-хăй çак самантра. Туйса илчĕ те, ăна йăпатма тытăнчĕ.

— Лăплан, Ахмет. Кăлăхах ан çунтар чĕрÿне. Пĕл: есĕ чирлĕ пулас, хумханни сийенлĕ саншăн.

Ленă Ахмета вăйпах краваŧ çине хăйпе йунашар лартрĕ, унăн кушăркаса хытса кайнă аллине илсе хăйĕн хулпуççийĕ çине хучĕ. Анчах Ахмет хăйне ачашçемçе аласем сĕтĕннине туймарĕ те.

— Ан тив... Кирлĕ мар, кирлĕ мар,— таткаланса тухрĕç унăн тăвăнса ларнă кăкăрĕнчен тăхлан пек йăвăр сăмахсем. Ленă икĕ утăм кайала чакса тăчĕ те, Ахмет аллинче кăвак канверт пуррине курчĕ. Вăл ăна хăвăртрах илчĕ, васкаса уçса вуларĕ. Хайар амак тытнă пек чĕтретсе пăрахрĕç Ленăна çырури хăрушă сăмахсем:

„Совет Сойузĕн чикисене сыхланă чух Йапони ирсĕр бандисен аллинчен пограничник Ахматуллин Керим паттăр вилĕмпе вилчĕ“...

— Вĕлерне... Вĕлерне!.. Санăн пиччуне...—аран-аран куççулне тытса чарса çавăрса каларĕ Ленă.

— Вĕлерне... Нихăçан та каçару пулмĕ вăл ирсĕр йытăсене манран! Каçару пулмĕ вĕсене çĕршывран! Пĕр çын вырăнне пинĕн-пинĕн çĕкленĕпĕр!—тĕреклĕ чышкисемпеле хайаррăн йунарĕ Ахмет.

Ленă ăнланчĕ. Аванах ăнланчĕ Ленă. Ахмета лăплантарма кăна тивĕçлĕ сăмах тупаймарĕ.

— Ахмет, тусăм,—терĕ вăл, сассине ăшшăнтарах кăларма тăрăшса.—Пасăрхишĕн каçар ес мана. Хĕр хăйусăрлăхĕ пулчĕ вăл. Тÿррипе калама вăтантăм епĕ. Ме, ак, ил çак чечеке. Вăл манăн чи таса та чи ăшă йуратăвăм.—Ленă ăна сат-пахчинчи клумбăран татса килнĕ чечек тыттарчĕ. Ахмет шурă розăна вăрахăн илчĕ те кăкăр çумне чăмăртарĕ.

— Тавтапуç, Ленă... — тесе ответлерĕ вăл.

— Еп сана кÿрентернисене пĕтĕмпех манса кай, Ахмет. Пайантан пуçласа иксĕмĕр ĕмĕр пĕр тупалă пулăпăр. Ан тив, тăшман аллинчен ÿкнĕ пиччун вĕри йунĕ çинче чечекленнĕ таса йурату пултăр ку,—ăна ыталаса йăпатрĕ Ленă.

— Çук, Ленă, тăшмана вунă хут ытларах тавăриччен те иксĕмĕр хушăмăрти йурату таттулă пулаймĕ. Ыранах тухса кайатăп епĕ пичче вырăнне йышăнмашкăн, унăн винтовкине алла çирĕп тытса тăван çĕршывăма сыхламашкăн,—татăклăн ответлерĕ Ахмет.

Тул çуталчĕ.

Пĕтĕм тĕнчене çутатса, хăватлăн та мухтавлăн хĕвел тухрĕ.

(Йулашки пулаŧ).

„Наргиз" опĕрăн пысăк ăнăçăвĕ

Спектакльте И. В. СТАЛИН, В. М. МОЛĂТĂВ, Л. М. КАГАНОВИЧ, К. Й. ВОРОШИЛĂВ, А. И. МИКОЙАН, М. Д. БАГИРĂВ йулташсем пулнă

Апрелĕн 11-мĕшĕнче каçхине Пысăк театр филиалĕнче композитăр Муслим Магомайĕвăн „Наргиз" оперинĕ—Азербайджанри совет теми тăрăх çырнă чи пирвайхи опĕрăна лартса кăтартнă. „Наргиз" опĕрă куракансене Азербайджан халăхĕ 1920 çулта йунлă мусаватиссене—Азербайджан çĕршывне йут çĕршывсенчи империалисăм колонийĕ туса хума хăтланакансене хирĕç кĕрешнин пĕр епизодне сарлакан кăтартса панă.

Магомайĕв композитăр çырнă опĕрă халăх музыкĕпе йуррисем çуратнă оригиналлă тата йанравлă мелодисемпе тулса илемленсе тăрать.

Спектакльре тĕп рольсенче вылякансен шутĕнче—Азербайджан ССРеспубликĕн халăх артиски Шевкет Мамедова, Азербайджан ССРеспубликĕн тава тивĕçлĕ артисĕсем Г. А. Гаджибабабекăв, М. Т. Багирăв, артиссем Йагуб Ризайĕв, Аждар Султанăв тата ыт. те. Уйрăмах Азербайджан ССРеспубликĕн халăх артискин Шевкет Мамедăвăн çитĕнуне палăртмала. Вăл Азербайджан халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе паттăрăн та хăйуллăн кĕрешнĕ хĕрĕн сăнлăхне чаплăн кăтартса панă.

Спектакль пысăк çитĕнупе иртнĕ. Залра ларакансем темиçе хутчен те тăвăллăн ала çупнă.

Спектакльте И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Катанович, К. Й. Ворошилăв, А. И. Микойан, М. Д. Багирăв йулташсем пулнă.

Спектакль пĕтсен спектакль куракансем артиссене тăвăллăн ала çупса саламланă.

(ТАСС).

Вăрлăх хуçалăхĕсене аркатса йанăшăн ответ тыттарнă

Районсенчи вăрлăх хуçалăхĕсене суртлă вăрлăх тупса парас ĕçе аркатса йанăшăн çавăн пекех тата вĕсене агрономсем тупса паманшăн ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Ейхе йулташ Смоленск облаç çĕрĕç пайĕн начальникне—Косыха ĕçрен кăларса суда панă. Районсенчи вăрлăх хуçалăхĕсемпе çителеклĕн йертсе пыманшăн Казах СС Республикĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарне Кужанăва йатласа хăварнă, Крым АСС Республикĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарне Йаранцĕва хыттăн йатланă.

Ейхе йулташ Алтай, Красноярск крайĕсен çĕрĕç пайĕн начальникĕсене, Архангельск, Вологда, Новосибирск, Омск, Калинин, Кирăв облаçĕсен çĕрĕç пайĕн начальникĕсене, çавăн пекех тата Башкир АСС Республикĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарне: вĕсем районсенчи вăрлăх хуçалăхĕсемпе йертсе пырассине лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмасан, вĕсене çирĕп ответ тыттарасси çинчен асăрхаттарнă.

(ТАСС).

Совет территорийĕ çинче Йапони самольотне тытнă

ХАБАРОВСК, апрелĕн 11-мĕш. (ТАСС). Апрелĕн 11-мĕшĕнче 12 сехет тĕлĕнче Йапонин тăхăр самольочĕ Гродековск районĕнчи Полтавка йалĕнчен 14 километр кăнтăрта совет чикки урлă каçса кĕнĕ. Вĕсем пирĕн территори çине 5 километр шалала вĕçсе кĕнĕ, тепĕр темиçе минутран çак самольотсем патне Манчжурирен Йапонин татах икĕ истребителĕ вĕçсе пынă.

Совет истребителĕсем сывлăша вĕçсе хăпарсан, вĕсем кайала тарнă. Йапонин пĕр самольочĕн чикĕрен хĕвелтухăçнеле икĕ километрта ССР Сойузĕн территорийĕ çине анса ларма тивнĕ.

Çав тытнă самольот металлран тунă пĕр моторлă истребителĕ пулнă. Самольот çинчи летчик хăйне Маеда йатлă тенĕ. Вăл çапла кăтартса панă: унăн самольочĕ Йапонин Корейăри çарĕн истребительсен батальон составĕнче тăракансĕр,—тенĕ.

Еçе тĕплĕн тĕрĕслесе пĕлме тытăннă.

Асăрхаттарни. ТАСС илнĕ сведĕнисем тăрăх, Мускавра çав çулте асăннă инцидент çинчен хыпар илсен çийĕнчех Иут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ ССР Сойузĕн Токиори полпредствине Йапони самольочĕсем совет чикки урлă каçса кĕнĕ пирки Йапони правительствине протеслеме хушнă.

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри фронтра Леридăран кăнтăрпа хĕвеланăç йеннеле республикă çарĕсем наступлени тума пуçланă. Мориельйа районĕнче (Ебро йуханшывран кăнтăрала) республикă чаçĕсем цăлхавçăсенчен Вальйбона йатлă йала туртса илнĕ тата сăртлă вырăнсене чылай йышăннă. Çав районта пăлхавçăсемпе интервентсем суйласа илнĕ чаçсене тата вĕр-çĕнĕ техникăпа тунă хăватлă вăрçă хатĕрĕсене нумай илсе пырса тултарнă. Анчах Итали дивизисем малала наступлени тума хăтланни ахалех пулнă, нимĕнле результатсем те паман.

(ТАСС).

Фашиссен авиацийĕ Испанире 26 пин ачана вĕлернĕ тата амантнă

Франци пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, март уйăхĕн вĕçĕнче пăлхавçăсен тата Италипе Германи самольочĕсем республикăлă Испани хулисемпе йалĕсем çине бомбăсем пăрахса çамрăк ачасене пурĕ 10.699 амантнă, 15.3.0 ачана вĕлернĕ.

(ТАСС).

Париж районĕнчи профсойузсен сĭесĕ

ПАРИЖ, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Енер Париж районĕнчи профсойузсен федерацин сĭесĕ хупăннă. Федераци çекретарĕн Анри Рейнон отчотлă докладне 2 928 сасăпа ырланă, хирĕç 234 сасă пулнă, сасăламасăр йулнисем—42. Сĭес 35 члентан ĕçтăвакан комисçи суйланă. Федераци ĕçтăвкомĕн генеральнăй çекретарне Анри Рейнона (коммунис) суйланă; унăн помошникне Енафа (коммунис) суйланă.

Йапони войенщчинин тискерлĕхĕ

Апрелĕн 10-мĕшĕнче Кантон хулинче Китай çарĕсем Таньзцин-Пукоу чукунçул патĕнчи фронтра çитĕнусем тунă йатпа уйав иртернĕ. Хула урамĕсенче пиншер çын пулнă. Çав вăхăтра урамри халăхсем çине Йапони самольочĕсем, питĕ те çултен вĕçсе пырса, темиçе бомбă пăрахнă. Çакăн хыççăн мирлĕ пурăнакан халăхсем хушшинче вилнисемпе аманнисем 500 çын шутланаççĕ.

Çав кунах Йапонин йăвăр бомбовозĕсен ескадрильйи Чанша хули çине (Хунань провинцин столици) бомбăсем пăрахса хытă тапăннă. Хулари университет çине 40 бомбă ытла пăрахнă. Вилнисемпе аманнисем 100 çын ытла шутланаççĕ. Вĕсем хушшинче студентсем те нумай.

(ТАСС).

К Ĕ С К Е Н

— Совет культурине вĕренекенсен Францири пĕрлешĕвĕ апрелĕн 8-мĕшĕнче Парижре ССР Сойузĕн Сталинла Конституцийĕ çинчен калакан документсен выставкине уçнă.

— Германи фашисĕсем Австрире арĕсленĕ политикăлă тата общчĕствăлă деятелсене, мĕн пурĕ 70 çынна, Дахаури (Германи) концентрацилĕ лагĕре илсе пынă. Вĕсен хушшинче—Венă хулин бургомистрĕ пулнă Шмитц, Ценер генерал, Австрири социал-демократсен руководителĕсенчен пĕри Доннеберг тата ыттисем те.

1896 В. В. МАЙАКОВСКИЙ 1930

Манми поета асăнса

Апрелĕн 11-мĕшĕнче Шупашкарти партилĕ хаçат шкулĕ çумĕнчи литкружок занятийĕ пулса иртрĕ. Занятинче чăваш поечĕ Уйăп Мишши сăвăсене мĕнле çырмали çинчен доклад турĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче уйрăмăнах вырăссен паллă поечĕ В. Майаковский хăйĕн сăввисене мĕнле çырни çинчен тата унăн сăввисем мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен каласа пачĕ.

Апрелĕн 14-мĕшĕнче литкружок членĕсен пухуне туса иртеретпĕр. Çак пухура В. Майаковский вилни 8 çул тултарнине хисеплесе унăн кунçулĕпе пултарулăхĕ çинчен доклад пулать. Литкружок членĕсем Н. Давилăвпа А. Васильĕва Майаковскин сăввисене вулаççĕ.

Совет епохинчи талантлă писатĕл

Пайан В.В. Майаковскине—совет епохинчи талантлă писатĕле—асăнмали кун. Вăл 1930 çулти пайанхи кун кĕтмен çĕртен вилсе выртнă.

В. В. Майаковский 1896 çулта çуралнă. Литературă ĕçне вăл пролетарилĕ Аслă революци умĕн хутшăннă. Çав вăхăтра патша Российĕнче тискер реакци пулнă. Анчах революцилĕ пролетариат пулас клас кĕрешĕвĕнче çĕнтерме вăй пухнă.

В. В. Майаковский пĕтĕм хăватпа буржуалă общчĕствăна хирĕç тăнă. Вăл 1912—1917 çулсем хушшинче çырнă сăвăсемпе поемăсенче капиталисăмла общчĕствăн тĕрекĕсене—буржуалă морале, харпăрлăха, тĕне, експоатацийе ылхании вăйлăн паларса тăрать. Империалисăмла вăрçă пуçлансан, вăл çав йунлă вăрçа хирĕç протеслене.

1917 çулхи Аслă революцийе В. В. Майаковский калама çук хавассăн кĕтсе илсе, хăйне, хăйĕн вăй-хăватне пролетариат революцине панă. Вăл вăхăтран пуçласа унăн творчĕстви хăватлăн сарăлса, чечекленсе ÿссе пыма пуçланă. Вăл сăвăсем çырнă, плакатсем ÿкернĕ. „150000000", „Владимир Илйич Ленин," „Хорошо"—В.В. Майаковский çырнă ĕмĕр манми чаплă поемăсем. Вăл çĕршыври пур событисене те активлăн хутшăнса пынă.

В. В. Майаковский — Октабер революцин йурăçи—совет епохинчи талантлă писатĕл. Çакăн пек сăнпа пурăнать унăн йачĕ социалисăмла тăван çĕршыври еççыннисен чĕринче.

В. Майаковский

Нетте йулташа, пăрахута тата çынна

(1926)

Ахаль мар çÿçентĕм.
Амак тамăк мар.
Вĕри çу пек çунан
порта кĕретĕ
Çавăрăнса йулташ
„Теодор
Нетте".
Çавă - вăл.
Паллатăп еп ăна.
Тирĕк-куçлахла çăлав ункисемпе.
—Аван-и, Нетте!
Саншăн савăнап
Ес пурнан—тăрпа-канат-крÿксем
пурнăçĕпе.
Çывăхрах килсем ес.
Ăшăх мар-и?
Батумран çити
вĕретрĕн пуль хурансене...
Çын пулнă чух,—
ес, Нетте, астăватни
дипкупере манпа чей ĕçнине.
Вăрахчĕ ес.
Ыйăхлисем çывăратчĕç.
Куç илми
сĕркĕч пичет çинчен,
тара ÿксе
ес сăвă вĕренеттĕн,
Шав пуплеттĕн
Ромкă Йакобсон *)çинчен.
Тĕлĕреттĕн ирпе.
Пÿрнÿ курок çинчех...
Çыхланăр—
кама ухута.
Шутланă-ши
тата тепĕр çултан
Сана тĕл пуласса—
пăрахута.
Корма хыçĕнче ман уйăх.
Ну и хÿхĕм те!
Выртать
Таварлăха икке çурса,
Калăн, коридор вăрçи витĕр илсе,
хăй хыçĕнчен
геройăн
йунлă та çутă йĕрне
ĕмĕр туртан.
Кĕнекери коммунисăма
ĕненеççĕ вăтамăн.
„Тем те çырма пулать
кĕнекере."
Кун пекки—
„суйланнине" те чун кĕртет
çасартăк,
коммунисăмăн
чăнлăхне, ÿт-пĕвне
кăтартать вăл пире.
Тимĕр тупа хĕсевĕнче
пурăнатпăр епĕр.
Вăл тупашăн—
хĕрес çине
пульăпа йĕрлĕр:
вăл—тĕнчере,—
Российĕсемсĕр,
Латвисемсĕр,—
пĕр тăванлă
етем общчежитийĕпе
пурăнма кирлĕ.
Тымарта пирĕн—
Йун, шыв марçке.
Пыратпăр епĕр,—
Таврара—пăшал сасси
çеç,—
Вилес пулсассăн—чысланмашкăн
пăрахутсенче,
сăвăсенче,
ытти ĕмĕр вилми ĕçсенче.
Пурнасчĕ те пурнасчĕ ман,
çитесчĕ ÿлĕме
Йулашкинчен, —
урăх кăмăлăм çуккă пĕртте,—
еп тĕлпуласшăн
хамăн вилĕме
тĕлпулнăн вилĕмне
йулташăм Нетте. **)

Иван Ивник куçарнă.

*)Роман Йакобсон—лингвист, литературовед.

**)Теодор Нетте—совет дипкурйерĕ пулнă Ăна дипломатилĕ почтăна паттăрăн сыхланă чухне, Латви çĕршывĕнче, пуйăс çинче фашиссем вĕлернĕ. Хура-тинĕс флочĕн пĕр пăрахутне Нетте йатне панă. Майаковский Неттепе йут патшалăхсене кайнă вăхăтра тĕл пулнă.

М. Спиридонăв пултарулăхĕ пирки

Мана, йалтан килнĕ çынна, чăваш театрне спектакль курма кĕрсен, М. Спиридонăв художникĕн ĕçĕсемпе паллашма тĕл килчĕ. Художникăн картинĕсене курнă хыççăн, чĕрере пысăк хавăслăх çĕкленет. Унăн картинăсем çырас пултарулăхĕ пысăк. Картинăсем тăрăх вăл çулран çул ăсталанса ÿссе пыни лайăхах курăнать.

Спиридонăв художник, пуринчен ытла çĕнĕ пурнăç çинчен, социалисăм строительствинчи çĕнĕ çынсен—ударниксен, стахановĕцсен сăнĕсене, çырса пама тăрăшнă. Унăн картинисене пăхса, епĕр хамăрăн куллен-кун йĕшĕрсе культурланса пыракан пурнăçа витĕрех куратпăр.

Пуринчен ытла орденоносĕц Степанăв, „Шăпăрçă", „Дойаркă"—тухйа тăхăннă хĕр, „колхоз лашине тасатакан çамрăк", „ташлакан чăваш хĕрĕ" картинăсем питĕ кăмала кайаççĕ. Автăр ку картинăсене калама çук маçтăр, чĕрĕ сăн-сăпатлă ÿкернĕ.

Çитĕнÿсем çинчен каланă май, çитменлĕхсене те кăтартма тивĕç. Епĕр Спиридонăв йулташ картинăсем çинче, пĕтĕмĕшпе илсен, хальхи çĕнĕ пурнăçа куратпăр. Анчах çав çĕнĕ пурнăçа тунă çĕрти чăрмавсемпе тата клас тăшманĕсемпе ĕçхалăхĕ хайаррăн кĕрешнине курмастпăр. Ман шутпа çавсем çинчен те кăтартма кирлĕ пек. Тата чăваш халăхĕн иртнĕ ылханлă пурнăçĕ çинчен çырнă картинăсем сахал унăн ĕçĕнче. Куракансен умне çĕнĕ пурнăç сăн-сăпачĕпе йунашар иртнĕ хĕн-хурлă пурнăç сăн-сăпачĕ те курăнса тăтăр.

Колхозник П. Павлăв.

Вăрман йухтаракан участкăсенчен

Хăвăртлăхсем çителĕксĕр

(Чăвашвăрманпромăн сводки тăрăх)

Шывсем уçăлчĕç. Вăрман йухтарас ĕçĕн хĕрÿлĕ тапхăрĕ пуçланчĕ. Анчах вăрман йухтарасси начар хăвăртлăхсемпе пырать-ха. Апрелĕн 11-мĕшĕ тĕлне шывсем хĕрне турттарнă 121,3 пин фесметр йăвăç материалĕсенчен 58 пин фесметрне, урăхла каласан 47,8 процентне çеç шыва йанă. Уйрăмăнах Улатăр вăрманпромхозĕ начар ĕçлет. Вăл 41,7 пин фесметр йăвăçран 8,4 пин фесметрне çеç йухтарма шыва йанă.

Льуьа шывĕ тăрăх пĕр кубла метр та йухтарман-ха. Унта хатĕрленÿ ĕçĕсене туса иртермен. Алтышĕвăри хăма савăчĕ йухса пынă йăвăç материалĕсене шывран кăларнă çĕрте ĕçлеме ĕç вăйĕ пухса договăрсем те туса пĕтермен.

Вăрман йухтарас ĕçре кампа танлашса ĕçлемели тĕслĕхсем пур. Шăмăршă вăрманпромхозĕнчи Сибиров бригади апрелĕн 10-мĕшĕнче нормăна 223 процент тултарнă. Çавнашкалах Косолапăв йулташ пĕр кунхи нормăна 357 процент тултарнă. Вĕсен паха опытне пур участкăсене те сармала. Кашни рабочийе вĕсен меслечĕпе ĕçлеме вĕрентмеле.

Вăрман йухтаракан организацисен хăйсен пĕтĕм ĕçне шыв тулнă вăхăтра плана тултарса çитермели çирĕп график тăрăх организацилес пулать. Апла тума пирĕн пур условисем те çителĕклĕ.

Литературă хроники

★ Чăвашиздат 1938 çулăн 1-мĕш кварталĕнче чăвашла çакăн пек кĕнекесем пичетлесе кăларчĕ: Ленинпа Сталин çинчен çырнă сăвăсемпе йурăсен кĕнеки, тĕне хирĕçле калавсемпе сăвăсен сборникĕ—„Турăсăр" йатлă сборник, Арк. Еçхелĕн тата Ив. Ивникăн сăвă кĕнекисем.

С. Елкерĕн „Хĕнхÿр айĕнче" поемине (2-мĕш издани), П. Н. Осипăвăн „Симфонийа будней", Мраньсан „Лайăх пурăнатпăр", Кăлканăн „Аниссă" (2-мĕш издани) пйессăсене тата Уйăп Мишшин „Тăван çĕршыв" йатлă сăвăсен сборникне пичете панă.

Вырăсларан куçарнисенчен: А. С. Пушкин—„Капитан хĕрĕ", Н. В. Гоголь—„Авлану", А. М. Горький—„Фома Гордейĕв", А. Чехов—„Водевилсемпе инсценировкăсем", А. Н. Островскин икĕ пйесси, Н. Островский—„Хурçă йепле хĕрнĕ" тата „Тăвăлра çуралнисем" йатлă романĕсене пичетлеççĕ.

★ Çамрăк писатĕлсенчен Ив. Ивник тата Н. Йанкас поетсене Чăваш Совет писатĕлĕсен Сойузне илнĕ.

★ Ухсай Йаккăвĕпе Н. Васанка йулташсене вырăнсăрах еleklese, хăйсене правлени ларăвне чĕнсе тĕплĕн сÿтсе йавмасăрах Совет писатĕлĕсен ретĕнчен кăларнăччĕ. Чăваш совет писатĕлĕсен Сойузĕн правленийĕ çак асăннă йулташсем пирки хăй йышăннă тĕрĕс мар решенийе пăрахăçласа, вĕсене кайала Сойуз ретне илнĕ.

Çавнашкалах Д. Данилăв йулташ пирки йышăннă решенийе те пăрахăçласа, ăна Сойуз членне илнĕ.

ИЗВЕЩЕНИЕ

На заседание выездной Центральной парттройки Комиссии Партийного Контроля при ЦК ВКП(б), имеющее быть 15—16 апреля 1938 года в г. Канаше в здании Райкома ВКП(б), для разбора апелляций вызываются следующие товарищи:

15 апреля к 10 часам утра

1. Сильвестров Иван Иванович, г. Канаш, ВРЗ.
2. Суранов Кузьма Емельянович, с. Тобурданово, Канашского района.
3. Максимова Марина Петровна, г. Цивильск, ул. Ленина, дом № 16.
4. Мокеев Матвей Васильевич, с. Пошнары, Ядринского района.
5. Рутте Петр Михайлович г. Канаш, ВРЗ, ул. Ильича, дом № 14, кв. 4.
6. Железтов Тимофей Капитонович, г. Канаш, ВРЗ ул. Ильича, д. 5 кв. 6.
7. Иванов Петр Иванович. Вурнары, леспромхоз.
8. Алексеев Петр Алексеевич. д. Иваново, Янтиковского района.
9. Катрамов Василий Петрович, д. Вурмар-кибеки, Ямашевское п/о, Шихазановского района.
10. Бройд Захар Моисеевич, г. Канаш, дом ж/д работников № 51, кв. 4.
11. Либерман Мася Давыдовна, г. Канаш, д. ж/д работников № 51, кв. 4.
12. Чижов Михаил Александрович. Шихазаны, прокуратура.
13. Ванерkke Евдокия Дмитриевна, г. Чебоксары.
14. Лаврентьев Александр Лаврентьевич, д. Тузи-Чурино, Шихазановского района.

16 апреля к 10 часам утра

1. Иванов Семен Иванович, п/о Толиково Чебоксарского района, д. Чигирь.
2. Яковлев Георгий Яковлевич, д. Тюмерово, Янтиковского р. учитель НСШ.
3. Афиногенов Макар Афиногенович. Вурнары, детсанаторий.
4. Конюшенко Дмитрий Евгеньевич. Арзамас, ул. М. Горького, дом № 67.
5. Милиндеев Иван Степанович. Ибреси, Райпрокуратура.
6. Савруков Арсений Александрович. Ибреси, лесхоз.
7. Окулов Георгий Филимонович. Чебоксары, Обком ВКП(б).
8. Павлов Никифор Павлович. Буинск, сланцевый рудник.
9. Светлов Александр Владимирович. Козловка, Кинотрест Чувашкино.
10. Николаев Василий Николаевич, п/о Урмары, д. Чубаево.
11. Григорьев Семен Григорьевич. Урмары, отделение Госбанка.
12. Степанов Андрей Степанович, д. Баишево, Урмарского района.

ПАРТКОЛЛЕГИЯ.

Ответлă редактăр Н. М СЕМЕНАВ.

„Агитатăр блок-ночĕ" № 4
пичетрен тухать
номĕрте:
РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене большевикла иртерер.
Мăнкун—тĕн тĕшмĕшĕ.
ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн парти пропагандипе агитаци тата пичет пайĕ.

Шупашкарти строительствă тытăмĕнче
ĕçлеме шут ĕçне пĕлекенсем, строительствă материалĕсене тăратакансем, тĕрлĕрен квалификацилĕ инженерсемпе техниксем тата ытти рабочисем
кирлĕ.
Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх. Çак адрĕспе пымала: Чернышевскайа урам, 5-мĕш № çурт, кадăрсен уйрăмĕ.

Чăвашпромсойуза кирлĕ:
1. Бухгалтĕр-ревизор
2. Материаллă пайра ĕçлеме бухгалтĕр
3. Картотетчик
4. Секретарь—стенографисткă
5. Оргинструктăр.
Çак адрĕспе пымала: Шупашкар хули, Театральнайа урам, 3. Телефон №-0—41.
2—1

Шупашкарти „КРАСНЫЙ КУСТАРЬ"
ертелĕ çакна пĕлтерет:
пуçа тăхăнмали, йапаласем çĕлеме йе йусама илсе пыракансен хăйсен материалĕсемпе пĕрле вĕсене дезинфекци туни çинчен дезокамĕрăран илнĕ справкă тăратмала.

КОЛХОЗСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА
Çитес çывăх вăхăтра Чăвашсойуз адрĕсĕпе 1,5 тоннă таран груз тийесе çÿремели автомашинăсем килеççĕ
Ку автомашинăсене государствăна сĕт-çу сутнă колхозсене параççĕ.
Кашни колхоз, государствăна 13 пин литр сĕт сутсан автомашинă илме пултарать.
Чăвашсойуз
Маслопром Чăваштресчĕ.

Çĕмĕрлери райпромкомбината
ЙАЛАН ĔÇЛЕМЕ КИРЛĔ:
Аслă бухгалтĕр 1
Инженер-механик 1
Плановик економист 1.
Хватер пур. Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх.
Дирекци.
3—2

Медсантруд профсойузĕн Облаçри комитетне
Машинисткă кирлĕ.
Канаш урамĕ, Сойузсен çуртне пымала.
2—2

Шупашкарти строительствăра
ĕçлекен инженерсемпе техниксене валли
уйрăм пÿлĕмсем кирлĕ.
Хак килĕшÿ тăрăх. Çак адрĕспе пĕлтермеле: Почтă, 12-мĕш № почтă йешчĕкĕ.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашлаглита № 189, Гор. Чебоксары, Типографи № 1 Чув. полиграфтреста, Заказ № 391. Тираж 16,250 экз. П. 6. 85—94 ...